К 81 Чув-2
А65

Е.А. Андреева

Ч-41884

# ЧӐВАШ ЧӖЛХИ

## СИНТАКСИС

справочник

Национальная библиотека ЧР
4-041884

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

**Е.А. Андреева**

# ЧĂВАШ ЧĔЛХИ

## Синтаксис

Справочник

**8—9-мĕш классем валли**

*Чăваш Республикин Вĕренӳ тата
çамрăксен политикин министерстви
шкулсенче усă курма ирĕк панă*

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2008

УДК 373
ББК 74.268.1 Чув
А 65

ПРОВЕРЕНО
2010

м-41884-09
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

**Андреева Е.А.**

А 65 Чăваш чĕлхи. Синтаксис: Справочник. 8—9-мĕш классем валли. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2008. — 95 с.

ISBN 978-5-7670-1566-5

Кĕнекере синтаксис ыйтăвĕсене кĕскен, тĕслĕхсемпе ăнлантарса панă. Ачасем çĕнĕ темăна вĕреннĕ чух та, вĕреннине çирĕплетнĕ чух та, пĕлĕве тĕрĕсленĕ чух та хăйсене кирлĕ ыйтупа кĕске информаци тупма пултараççĕ. Унсăр пуçне синтаксис тишкерĕвне тумалли йĕркене тĕслĕхсемпе ăнлантарни, ачасен пĕлĕвне хăвăрт тĕрĕслесе хак пама май паракан тестсен тĕслĕхĕсем пур.

**УДК 373**
**ББК 74.268.1 Чув**

© Андреева Е.А., 2008
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2008

**ISBN 978-5-7670-1566-5**

## УМĔН КАЛАНИ

Синтаксис — чĕлхе наукин пуплев епле йĕркеленни çинчен вĕрентекен пайĕ. Унăн хăйĕн ăнлавĕсемпе единицисем пур. Чăваш чĕлхи программинче палăртнă тăрăх, синтаксис ыйтăвĕсене ачасем 8—9-мĕш классенче вĕренеççĕ. Кĕнекере çав ыйтусене пурне те кĕскен, тĕслĕхсемпе ăнлантарса çырса панă. Материала çакăн евĕрлĕ вырнаçтарни ачасемшĕн питĕ меллĕ, мĕншĕн тесен вĕсем кирек хăш вăхăтра та (çĕнĕ темăна вĕреннĕ чух та, вĕреннине çирĕплетнĕ чух та, пĕлĕве тĕрĕсленĕ чух та) хăйсене кирлĕ ыйтупа кĕске информаци хăвăрт тупма пултараççĕ.

Унсăр пуçне кĕнекере синтаксис тишкерĕвне тумалли йĕркене тĕслĕхсемпе ăнлантарни, харпăр хăй тĕллĕн тишкерӳ тумалли тĕслĕхсем те пур.

Юлашки вăхăтра пĕлĕве тестсем урлă тĕрĕслесси анлă сарăлчĕ. Çавна шута илсе шкул ачисен синтаксис пĕлĕвне хăвăрт тĕрĕслесе хак пама май паракан хăш-пĕр тест тĕслĕхĕсене те сĕннĕ. Вĕсемпе вĕрентĕвĕн кирек хăш тапхăрĕнче те усă курма пулать. Вĕренекенсен пуплевне аталантарас тĕллевпе текст шайĕнче пурнăçламалли ĕçсем те кĕртнĕ.

# СИНТАКСИСĂН ТĔП ЕДИНИЦИСЕМ

**Синтаксис** — чĕлхе наукин пуплев епле йĕркеленни ҫинчен вĕрентекен пайĕ.

**Синтаксис единицисем**

| **Сăмах майлашăвĕ** — пĕр ăнлавпа ҫыхăннă хăй пĕлтерĕшлĕ икĕ е темиҫе сăмах пĕрлешĕвĕ. Унăн паллисем: 1) тулли пĕлтерĕшлĕ икĕ е ытларах сăмах форминчен йĕркеленет; 2) вĕҫленнĕ интонациллĕ пулмасть; 3) пĕр сăмахлă пулма пултараймасть. | **Предложени** — вĕҫленнĕ уйрăм шухăша палăртакан пĕр сăмах е сăмахсен пĕрлешĕвĕ. Унăн паллисем: 1) вĕҫленнĕ уйрăм шухăша палăртать; 2) вĕҫленнĕ интонациллĕ пулать; 3) пĕр сăмахлă та пулма пултарать. |
|---|---|

**Сăмах майлашăвĕн тытăмĕ**

| **Ансăр сăмах майлашăвĕ** — хăй (тулли) пĕлтерĕшлĕ икĕ сăмах пĕрлешĕвĕ: ***ҫăмламас упа, шурă юр, вăрмана кĕр, хаҫат валли ҫыр.*** | **Анлă сăмах майлашăвĕ** — хăй (тулли) пĕлтерĕшлĕ виҫĕ е ытларах сăмах пĕрлешĕвĕ: ***савра ҫăкăр чĕлли, аслă урампа пыр.*** |
|---|---|

**Анлă сăмах майлашăвĕн тытăмĕ**

| Сăмах майлашăвĕн тĕсĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Тĕп пайĕ — сăмах майлашăвĕ, пăхăнаканни — сăмах. | *ҫĕнĕ / чул ҫурт* |
| Тĕп пайĕ — сăмах, пăхăнаканни — сăмах майлашăвĕ. | *ҫутă кăвак / тӳпе* |
| Тĕп пайĕ те, пăхăнаканни те — сăмах майлашăвĕсем. | *чăваш тĕррилĕ / пурҫăн кĕпе* |

## Сăмах майлашăвĕнчи çыхăну мелĕсем

| | |
|---|---|
| Пайĕсен вырăнĕ-йĕрки — сăмахсем юнашар тăрса çыхăнни | *çутă ĕмĕт, шăнкăр-шăнкăр шыв, виçĕ çул, йывăç кĕреçе, ку кĕтес, йăл-йăл кулă* |
| Падеж аффиксĕсем: **[-ăн(-ĕн), -а(-е), -та(-те), -ра(-ре), -че, -ран(-рен), -тан(-тен), -чен, -па (-пе), -пала(-пеле), -палан (-пелен), -сăр(-сĕр), -шăн (-шĕн)]** | *вăрманта пурăн, пӳлĕмрен тух, урамра выля, юлташпа калаç, чуна савăнтар, кăмпасăр таврăн, юлташшăн тăрăш* |
| Камăнлăх формин аффиксĕсем: **[-ăм(-ĕм), -у(-ӳ), -ĕ(-и)]** | *сĕтел ури, пӳрт кĕтесĕ, манăн тăванăм, санăн пӳлĕмӳ* |
| Ытти аффикссем: **[-лă(-лĕ), -чен, -лăх(-лĕх), -ла(-ле), -серен, -ри (-ти,-чи), -хи** т.ыт.те**]** | *чечеклĕ улăх, кĕпелĕх пурçăн, çуллаччен пурăн, каçсерен тух* |
| Хыç сăмахсем: **[чух, хыççăн, çĕре, валли, çинчен, умĕн, пирки, тĕле, евĕр, пек, май]** | *юлташ валли ил, çумăр хыççăн тух, çиле май пыр, кино пирки калаç, улттă тĕлне пыр, ман çинчен кала, улăп пек паттăр, аслати евĕр сасă* |

# Хутсăр предложени

## Предложенисене каланин тĕллевне кура ушкăнлани

| Ыйтуллă предложенисем | Ыйтусăр предложенисем | | |
|---|---|---|---|
| Мĕн çинчен те пулин ыйтнине пĕлтереççĕ: | **Калуллă предложенисем** мĕн çинчен те пулин каласа параççĕ: | **Хистевлĕ предложенисем** мĕн те пулин тума хистеççĕ: | **Ĕмĕт, сунăм пĕлтерĕшлĕ предложенисем:** |
| ***Эсир чăваш халăхĕн паянхи ĕç-хĕл, ăс-хакăл, культура шайне мĕнле хаклană пулăттăр?*** | ***Тин кăна вăраннă хĕвел çĕр питне ăшшăн çупăрларĕ.*** (М.Андреева.) | ***Илсе çӳре-ха пире, хаклă Кирилл Константинович, тепĕр хут авалхи Греци çĕршывĕ тăрăх, Египет фараонĕсем çинчен каласа кăтарт.*** (П. Афанасьев.) | ***Килессе пĕлнĕ пулсан хапха умне тухăттăм, пирĕн тĕле çитсессĕн хирĕç утса пырăттăм.*** |

# Предложени членĕсем

## Предложенин тĕп членĕсем

| | |
|---|---|
| **Подлежащи** — предложенири ***кам? мĕн? камсем? мĕнсем?*** ыйтусенче тăракан, ытти сăмахсене пăхăнман тĕп член.<br>*Чи çÿллĕ тусен тăррине* ***çил*** *йăва çаварнă, ĕмĕрсем хушши унта пурăнса чулсене якатса янă, шăтарса кĕнĕ.* (Ю. Скворцов.) | **Сказуемăй** — подлежащи ĕçне е пĕр-пĕр паллине кăтартса ***мĕн тăвать? мĕн вăл? кам вăл? вăл мĕнле?*** тата ытти ыйтусенче тăракан тĕп член.<br>*Сайра хутра çеç пĕлĕт ăшĕнчен юмахри хуп-хура хĕвел пек ту тăрри кăшт* ***пăхса илет*** *те каллех* ***çухалать.*** (Ю. Скворцов.) |

## Подлежащи пулăвĕ

| Хăш пуплев пайĕсенчен пулать | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Япала ячĕ | *Хура* ***аист*** *— вăрманта вăрттăн пурăнакан чарлан пек кайăк.* (Н. Сладков.) |
| Местоимени | *Çак кунран пуçласа* ***эпĕ*** *пĕр тĕпрен ÿсекен икĕ шурă хурăна яланах тимлесе сăнама тытăнтăм.* (Г. Ефимов.) |
| Паллă ячĕ | *Çăкăртан* ***асли*** *те çук,*<br>*Çăкăртан* ***хакли*** *те çук.* (В. Петров.) |
| Хисеп ячĕ | *Тĕркĕшнĕ май утă лавĕ çинчен* ***иккĕшĕ*** *те шуса анчĕç.* (В. Алентей.) |
| Глаголăн сăпатсăр формисем | ***Тăрăшни*** *нихăçан та сая каймасть çав.* (В. Алентей.) ***Илесси*** *çăмăл,* ***парасси*** *йывăр.* (Ват. сăм.) |
| Сăмахсен пĕрлешĕвĕ | *Унтан* ***Кавруша Карачăм иккĕшĕ*** *те йывăç тураттисем çине улăхса утлана-утлана ларчĕç.* (Д.-Чалтун.) |

## Сказуемăй пулăвĕ

| Пуплев пайĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1 | 2 |
| Сăпатлă формăри глагол | *Çерем çинче пĕр хура курак ушкăн шăнкăрч хушшинче уткаласа* ***çÿрет.*** *Кисловодскпа сывпуллашнă май Зинови юлашки хут турбаза кил картине* ***кĕчĕ.*** (Ю. Скворцов.) |

| 1 | 2 |
|---|---|
| Сăпатсăр формăри глагол (причасти) | *Усала хирĕç ман ятпа çирĕппĕн* ***тăмалла***. (Г. Ефимов.) *Кĕçĕр иккĕшĕ те чĕнтĕрлĕ шурă кĕпе* ***тăхăннă***, *симĕс саппун* ***çакнă***, *шурă тутăр* ***сыхнă***. (А. Артемьев.) |
| Япала ячĕ | *Тăри — вĕçĕмсĕр кăвак инçете юратакан* ***кайăк***. (В. Алентей.) *Ашшĕ вăрăм сăмсаллă шурă* ***карттуспа***. (И. Егоров.) |
| Хисеп ячĕ | *Ăмăртура мала тухакансем —* ***виççĕмĕшсем***. *Акă эсĕ* ***çирĕмре***. (Ст. Лашман.) |
| Еверлев сăмахĕ | *Кушак тяппи* ***тяп-тяп***. (Чăв. хал. сăм.) *Çаран —* ***ян!*** *та* ***ян!*** (В. Энтип.) |
| Местоимени | *Паян класра дежурнăй* ***эсĕ***. *Ку кĕнеке* ***манăн***. |
| Сăмахсен пĕрлешĕвĕ | *Манăн та пусăрăнчăк кăмăл* ***çекленме пуçларĕ***. *Унпа çумăн тăрса кăшт* ***çамрăкланса кайрăм-ши?*** (И. Егоров.) *Çил* ***çукпа пĕрех***. (В. Алентей.) |

## Предложенин кĕçĕн членĕсем

| Определени | Дополнени | Обстоятельство |
|---|---|---|
| **Определени** — япала ятне ăнлантаракан кĕçĕн член: *Зинови ури айĕнче* ***вĕтĕ*** *чулсем юхса шăкăртатрĕç*. (Ю.Скворцов.) | **Дополнени** — ĕçе е мĕнлелĕхе кăтартакан сăмаха ăнлантарса падеж ыйтăвĕсенче тăракан кĕçĕн член: *Çирĕклĕх* ***шывне*** *вăрăм çÿç пек усăнакан туратлă çирĕксем хупласах хунă*. (Ю.Скворцов.) | **Обстоятельство** — ĕç мĕнлелĕхне, вăхăтне, вырăнне, сăлтавне, тĕллевне т.ыт.те кăтартакан кĕçĕн член: ***Урамра*** *чечек шăваракан хĕрсем çеç тулли лейкăсем* ***йăтса газонсем хушшипе*** *утаççĕ*. (Ю.Скворцов.) |

## Определени пулăвĕ

| Хăш пуплев пайĕсенчен пулать | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1 | 2 |
| Япала ячĕ | ***Кайăк юррилĕ*** *вăрман* ***çынсен*** *савăнăçĕпе янăрать*. (Г.Ефимов.) |

| 1 | 2 |
|---|---|
| Паллă ячĕ | *Хурчка аçи йăвине* ***çӳллĕ*** *йывăç тăррине вырнаçтарать.* (Н.Игнатьев.) |
| Хисеп ячĕ | *Петюкпа пĕрле* ***пĕр*** *тĕпрен ӳсекен* ***икĕ*** *хурăн патне кайса килтĕмĕр.* (Г.Ефимов.) |
| Местоимени | ***Хамăрăн*** *ачалăха аса илме каникулсенче хурăнсем патне кайса килеттĕмĕр.* (Г.Ефимов.)<br>***Леш*** *чăрăш йĕкелĕ вара ку таранччене* ***манăн*** *сĕтел çинче выртать.* (Н.Сладков.) |
| Евĕрлев сăмахĕ | ***Пăлтăр та пăлтăр*** *пултăранăн*<br>*Папка та ярас вăхăчĕ.*<br>*Ан çилленĕр, ваттисем,*<br>*Выляс-кулас та вăхăчĕ.* (Хал. юрри.) |
| Наречи | ***Пĕччен*** *пуç пĕшкĕнет, ушкăн йыш ут утланать.* (Ват. сăм.) |
| Сăпатсăр формăри глагол (причасти, инфинитив) | ***Тытас*** *чĕр чуна асăрхасан хăлат çĕр çинелле урисене малалла тăсса чул пек ӳкет.* (Н.Игнатьев.) *Турат çинче* ***ларакан*** *кайăк çумран вĕçсе* ***иртекен*** *хурт-кăпшанка сывлăшра тытать.* (Н.Игнатьев.) |

## Дополнени пулăвĕ

| Хăш пуплев пайĕсенчен пулать | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Япала ячĕ | *Урама тухсанах сивĕ* ***пите*** *çулăм пек пĕçертсе илет.* (В.Алентей.) |
| Паллă ячĕ | *Улăхра курсан чечек*<br>*Ешĕл çуркунне.*<br>*Ан васка эсĕ татма*<br>*Чи* ***илемлине.*** (В. Урташ.) |
| Хисеп ячĕ | *Илюк шкулта аван вĕреннĕ, уроксенче яланах* ***«тăваттă»*** *та* ***«пиллĕк»*** *илнĕ.* (Л.Агаков.) |
| Местоимени | *Сĕве кукринче миçе пулăç ларать!* ***Кашнин*** *вăлта яма ятарласа тунă çурутрав пур.* (А.Кăлкан.) *Кĕре хирĕç уйрăмах хĕрӳ вăхăт пуçланать* ***уншăн.*** (Ю.Силэм.) |
| Глаголăн сăпатсăр форми (причасти) | *Валентин вăра халтан кайиченех ĕçлерĕ, пурпĕр* ***ывăннине*** *кăтартасшăн пулмарĕ...* (А.Артемьев.) |

## Обстоятельство пулавĕ

| Хăш пуплев пайĕсенчен пулать | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Япала ячĕ | ***Тӳпере*** *тăрисем мĕн тери янăравлăн, мĕн тери хĕпĕртесе юрă шăрантараççĕ.* (В.Алентей.) |
| Паллă ячĕ | *Униççе карчăк пӳрчĕн чӳрече кантăкĕ* ***шап-шурă*** *шăннă.* (В.Алентей.) |
| Хисеп ячĕ | ***Çиччĕ*** *виç те* ***пĕрре*** *кас.* (Ват. сăм.) *Ыран эсĕ* ***тăххăрта*** *кил вара.* (В.Игнатьев.) |
| Местоимени | ***Темшĕн*** *шăпах çак лĕпĕш канăç памасть мана.* (Н.Сладков.) |
| Наречи | ***Кăçал*** *кĕрт тарăн çав.* |
| Евĕрлев сăмахĕ | *Бухгалтер сĕтел умне хуллен утса пычĕ те* ***ярт*** *тăсăлса тăчĕ.* (В.Алентей.) |
| Глаголăн сăпатсăр форми (деепричасти, инфинитив) | *Хĕллехи йăвинчен хĕвел çинче* ***хĕртĕнме*** *мăнтăркка пурăш* ***йăраланса*** *тухать.* (Н.Сладков.) *Лăпкă çанталăкра тӳперен* ***çаврăнса*** *анакан юр пĕрчисене* ***сăнама*** *ытла та лайăх.* (В.Алентей.) |

## Обстоятельство ушкăнĕсем

| Пĕлтерĕш ушкăнĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Мĕнлелĕх обстоятельстви | *Малти вар шырланĕнче карласа юхакан çурхи шыв сасси чӳречерен* ***шăппăн-шăппăн*** *илтĕнет.* (К.Чулкаç.) |
| Вырăн обстоятельстви | *Хаяр, арăш-пирĕш çанталăкра эпĕ* ***наряда*** *уйрăмах кăмăллăн каяттăм.*(В.Алентей.) |
| Вăхăт обстоятельстви | *Юпа уйăхĕнчи юр* ***çĕрле*** *е* ***ирхине*** *шӳсе çемçелнĕ çĕр питне тăрăшсах шурă пĕркенчĕкпе витет.* (М.Кипек.) |
| Тĕллев обстоятельстви | *Çапла вăрман тăрăх аташса çӳресен-çӳресен* ***канма*** *лартăм.* (В.Алентей.) |
| Виçе обстоятельстви | *Чӳк уйăхĕнчи юр вара* ***часах*** *ирĕлсе пĕтмест, хăш чух икĕ-виçĕ эрне хушши ура айĕнче кăчăртатса выртать.* (М.Кипек.) |
| Пирке обстоятельстви | *Хĕвел хытă* ***хĕртнĕрен***<br>*Тухать курăк çăп-çăра.* (К. Иванов). |

## Хутсăр предложенисене тĕп членĕсем пуррипе çуккине кура ушкăнлани

| Предложени тĕсĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| **Икĕ тĕп членлă предложенисенче** тĕп членсем иккĕшĕ те пулаççĕ. | *Шăнкăр-шăнкăр çăлкуççен шĕлтĕртетĕвне тăнласа яштака **хурăнсем** ухăна-ухăна ачаш шевлепе **вылянă**.* (Н.Ильин.) |
| **Пĕр тĕп членлă предложенисенче** тĕп членсенчен пĕри çеç пулать. | *Паян тумалли ĕçе ырана **ан хăвар**. Хăнана хыт сухари **сĕнмеççĕ**.* (Ват. сăм.) |

## Пĕр тĕп членлă предложенисем

| Предложени тĕсĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Подлежащисĕр предложенисем | ***Калаçасчĕ** ман çынпа пĕрре тăват-пилĕк çул каяллахи пек — çак ăшăмри хăватсăр, чунтан.* (Ю.Скворцов.) |
| Сказуемăйсăр предложенисем | *Хурама çулçи пек çулçăллă, пысăк кĕрен сапакаллă **каштансем**…* (Ю.Скворцов.) |

## Подлежащисĕр предложенисем

| Тĕп членĕн пулăвĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Сăпатлă формăри глагол | *Ватă çерçие хывăхпа **улталаймăн**. Тытман упа тирне **ан сӳ**.* (Ват.сăм.) |
| Пулас причастипе унăн ушкăнĕсем | *Тем пекех **таврăнас килнĕ** унăн тăван çĕршывне.* (А.Артемьев.) |
| Деепричастипе унăн ушкăнĕсем | ***Тĕттĕмленсе ларчĕ** ĕнтĕ.* (А.Артемьев.) *Каçпа Ухтивана **пĕçертсе пăрахрĕ**.* (Хв. Уяр.) |
| Пулмалли причастипе унăн ушкăнĕсем | *Мухтавлă хĕре кĕмĕл медаль **памалла тунă**.* (А.Артемьев.) |
| Паллă ячĕ | *Уйра **шăп**.* (Хв. Уяр) *Пӳртре **таса, çутă**.* (Илпек М.) |

### Сказуемăйсăр предложенисем

| Предложени тĕсĕсем | Тĕп членĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| Предложенире япала ячĕпе ун ушкăнне кĕрекен сăмахсем çеç пулаççĕ. | Япала ячĕ | *Ту çинче çеç пулакан янкăртан та янкăр, кăн-кăвак **тӳпе.** Кисловодскра çеç пулакан пĕр сулăм çилсĕр **сывлăш.*** (Ю. Скворцов.) |
| Предложенире япала ячĕн ушкăнне кĕмен сăмахсем те пулаççĕ. | Япала ячĕ | *Тавракурăм хĕрринче— капмар пĕлĕт пек купаланса тăракан ĕмĕр ирĕлми пăрлă **тусем.*** (Ю. Скворцов.) |

**Тулли мар предложени** тесе пĕр-пĕр сиктерсе хăварнă члена çăмăллăнах кĕртсе лартма май пур предложение калаççĕ.

### Тулли мар предложенисем

| Тулли мар предложенисен тĕсĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Тулли мар предложенири сиктерсе хăварнă сăмахсем текстран е калаçуран паллă. | — *Ку сирĕн мĕнле ял пулчĕ?*<br>— ***Куракьелĕ.***<br>— ***Унта** çитме миçе çухрăм пулать?*<br>— ***Виççĕ.*** (Хв. Уяр.) |
| Хутлă предложенин пĕр пайĕ тулли мар пулма пултарать. | *Куç хитрине юрататать, **тута — тутлине.*** (Ват.сăм.) |
| Юнашар тăракан уйрăм хутсăр предложенисем шухăшĕпе тачă çыхăннă чух тулли мар пулма пултараççĕ. | *Акă пристань. Каччă чунне лăплантарас тесе пристане тухмарĕ. **Каютăрах куçне хупса ларчĕ.*** (Юхма М.) |
| Хăш-пĕр тулли мар предложенисенче ĕçне тăваканни глагол сăпатĕнчен паллă пулнипе подлежащине каламасăр хăвараççĕ. | *Эх, **пыраттăмăр** вара çапса çăвакан çумăра хирĕç.* (В.Алентей.) *Касса **илетĕн** те пĕр-пĕр якарах турата шаккаса шанкине **ӳкеретĕн,** пулас шăхличвалли хуппинчен чĕлĕх **тăватăн.*** (А.Емельянов.) |

## Пĕр йышши членлă предложенисем

**Пĕр йышши членсем** — ытларах чухне пĕр ыйтурах тăракан, предложенин пĕр членĕпе çыхăнакан сăмахсем.

| Предложени членĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Подлежащи | *Яштак* ***чиесем,*** *çĕмĕрт* ***йывăççисем,*** *çатрака туратлă* ***улмуççисем*** *шап-шурă тумпа витĕннĕ.* (Л.Агаков.) |
| Сказуемăй | ***Шавлать, кашлать*** *сĕм вăрман.* (К.Иванов.) *Юратнă кĕтесĕм çамрăклăх* ***пиллерĕ,*** *ĕçе* ***хăнăхтарчĕ,*** *ĕçре* ***пиçĕхтерчĕ,*** *пурнăç сукмакĕ çине* ***кăларчĕ.*** (Ком. ялавĕ.) |
| Определени | ***Чухăнлăх, пуянлăх, уйрăмлăх*** *йăранĕ ирĕкпе çĕнелнĕ пурăнăçран тарĕ.* (Çеçпĕл М.) *Вăрăм курăк çинчи сывлăм* ***хĕрлĕ, сарă, кăвак, симĕс*** *шăрçасем пек йăлтăртатать.* (В. Петров.) |
| Дополнени | ***Валем, купа, капансем*** *лартса тухрĕç сарлака улăх варрине. Пурăш ўсен-тăран* ***тымарне те, хурт-кăпшанка та, ăмана та, шăшие те, шапана та*** *юратса çиет.* (Хв. Уяр.) |
| Обстоятельство | *Хура аист сулхăнра кăна хура курăнать, хĕвел çинче* ***симĕссĕн, кăваккăн, йăм хĕрлĕн*** *йăлтăртатать.* (Н. Сладков.) ***Хăранипе, ывăннипе*** *чĕркуççисем тăр-тăр чĕтреççĕ.* (Хв. Уяр.) |

### Пĕр йышши членсен çыхăнăвĕ

| Союзсăр çыхăну | Союзлă çыхăну |
|---|---|
| *Мĕн ĕлĕкрен пирĕн мăн асаттесем ўсен-тăран уссине* ***пĕлсе тăнă,*** *вĕсемпе тĕрлĕ чир-чĕртен* ***сипленме пĕлнĕ.*** (О. Ефимов.) | *Вăл е сăлтавсăрах ахăлтатса* ***кулса ярать,*** *е тата кунĕ-кунĕпех пĕр чĕнмесĕр тарăн* ***шухăша кайса ларать.*** (П. Афанасьев.) |

## Пĕр йышши членсем союзсемпе çыхăнни

| Сыпăнуллă союзсем | | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| Сыпăнтаракан союзсем | **Та (те)** | *Шкул ачисем ирхи апат **çирĕç те** кĕнекесем илсе садри йăрăс тирексем айне тухса **ларчĕç**. (*Г.Ефимов.*)* |
| | **Тата** | *Е.В.Владимиров — паллă **критик, тĕпчевçĕ, сăмах ăслăлăхĕсен тухтăрĕ тата педагог**.* (А.Мефодьев.) |
| | **Ни** | *Çак **ни вырăс, ни чăваш** хĕр ачин калаçăвĕ юлташсем хушшинче чыса та, мăнкăмăллăха та ӳстеретчĕ.* (П.Афанасьев.) |
| Хирĕçлекен союзсем | **Анчах** | *Вăл хăлхине тăратса **итлет, анчах** калаçăва **хутшăнмасть**.* (Хв. Уяр.) |
| | **Çапах** | *Юман темĕн те **тӳсет, çапах** çӳллех **ӳсет**.* (А.Артемьев.) |
| | **Унсăрăн** | *Оленька яланах кама та пулин **юратать, унсăрăн** пурăнма та пултараймасть.* (А.Чехов.) |
| | **Ахальлĕн** | *Юрать-ха **тухрăм**, **ахальлĕн** сана та **кураймастăм**.* (А.Лазарева.) |
| Уйăракан союзсем | **Е—е** | *Вăл кăнтăрла **çывăрать е** Атăл хĕрне **анать**. Çынсене курсан вăл **е пăрăнса утать, е** çĕрелле пăхса **иртсе каять**.* (Хв.Уяр.) |
| | **Пĕрре—тепре** | *Хĕр Зинови умĕнче ĕçне пăрахсах пуç тутрине **пĕрре** хытарса **çыхнă пек, тепре пушатнă пек** куçаркаларĕ.* (Ю.Скворцов.) |
| | **Пĕр—пĕр** | *Сӳс хӳреллĕ хурçă йытă **пĕр кĕрет** те **пĕр тухать**.* (К.Иванов.) |
| | **Те—те** | ***Те кулать, те макăрать** вăл — уйăрса илеймерĕм.* (В.Петров.)<br>*Вĕсем **те мана, те ăна** темскер кăшкăрса хуллен кулкалаççĕ.* (Ç. Элкер.) |
| Пăхăнуллă союзсем | **Пулин те, пулсан та** | *Уйăх **çутатать пулин те, ăшăтмасть**.* (Ват. сăм.) *Пилеш çиме **йӳçĕ пулсан та, усăллă**.* |

### Союзсăр çыхăннă пĕр йышши членсем хушшине чарăну палли лартасси

| Запятой | Тире | Икĕ точка | Точкăпа запятой |
|---|---|---|---|
| Пĕр йышши членсем пĕр евĕрлĕрех япаласене, пулăмсене, ĕç-хĕле сăнлаççĕ пулсан вĕсене **запятой** лартса уйăраççĕ: ***Упасем, пурăшсем, чĕрĕпсем*** *çуркуннеччен пĕр вăранмасăр шăтăкра çывăраççĕ.* (Н.Сладков.) | Пĕр йышши членсем пĕр-пĕрне хирĕçле пĕлтерĕшлĕ пулсан вĕсем хушшине **тире** лартаççĕ: *Мулкачсем, пăшисем, кашкăрсемпе çўлевĕçсем юр вителĕк çинех* ***выртаççĕ — чирлемеççĕ.*** (Г.Орлов.) | Пĕр йышши членсенчен пĕри пĕлтерĕшĕпе ыттисенчен анлăрах пулсан ун хыççăн **икĕ точка** лартаççĕ: *Çав хушăра хуçа часрах мĕн тумаллисене* ***тумаваскать****: ăна-кăна* ***илсе кĕрет****, апат лартса* ***парать.*** (Хв. Уяр.) | Анлă пĕр йышши членсем хушшине **точкăпа запятой** лартаççĕ: *Акă вăл, тем асăрханă пек, аяккалла* ***чăмрĕ*** *те самантрах çўлелле çĕкленсе инçех мар ўсекен хыр турачĕсен хушшинче* ***çухалчĕ;*** *унтан тепĕр йĕкел йăтса тухса каллех хăйĕн кивĕ вырăнне, тăрри хуралнă хыр çине,* ***таврăнчĕ.*** (Г.Орлов.) |

**Пĕтĕмлетў сăмахĕсем** – пĕлтерĕшĕ енчен пĕр йышши членсене пĕтĕмлетекен сăмахсем. Вĕсем пĕр йышши членсемпе пĕр ыйтура тăраççĕ, предложенин пĕр членĕпе çыхăнаççĕ.

### Пĕтĕмлетў сăмахĕсене чарăну паллипе уйăрасси

| Пĕтĕмлетў сăмахĕн вырăнĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1 | 2 |
| Пĕр йышши членсем умĕнче тăракан пĕтĕмлетў сăмахĕсем хыççăн **икĕ точка** лартаççĕ. | ***Мĕнпур*** *тавралăх вуншар тĕслĕ катрамран тăрать тейĕн: ешĕл калча, йăмăх хура çул, хĕрлĕ çулçăсем, тĕк пек çăмăл пĕлĕтсем...* (П.Афанасьев.) |

| 1 | 2 |
|---|---|
| Пӗр йышши членсем хыҫӗнче тӑракан пӗтӗмлетӳ сӑмахӗсем умӗн **тире** лартаҫҫӗ. | *Вӗсем хушшинче тӑхран, пӑрчкан, кӗпшӗл, сӑнчас, шӑлинкурӑс, пуса та майра кайӑкӗсем —* ***йӑлтах*** *пур пулас.* (Ю.Скворцов.) |
| Пӗтӗмлетӳ сӑмахӗсем пӗр йышши членсем умӗн тӑнӑ чух предложени вӗҫленмест пулсан умӗн **икӗ точка,** хыҫҫӑн **тире** лартаҫҫӗ. | *Хӗлле* ***пур йывӑҫ та:*** *юман та, ҫӑка та, хурӑн та —* ***пурте*** *шап-шурӑ юр айӗнче.* (Н.Сладков.) |
| Пӗтӗмлетӳ сӑмахӗ пӗр йышши членсем умӗн те, хыҫҫӑн та тӑнӑ чух пӗр йышши членсем умӗн те, хыҫҫӑн та тире лартма юрать. | *Эпӗ* ***пур ӳсен-тӑрана та*** *— чечеке те, йывӑҫа та, курӑка та —* ***пурне те*** *хӗрхенетӗп.* (С. Аслан.) |

## Предложенири интонаципе уйрӑмлатнӑ сӑмахсем

| Уйрӑмлатнин сӑлтавӗсем | Тӗслӗхсем |
|---|---|
| Интонаципе уйрӑмлатни предложенири сӑмахсен ҫыхӑнӑвне тӗрӗс палӑртма май парать. | *Пуҫсем тӑрринче,* ***тӗнче пӗтнӗ пек****, ҫил кӗрлет-ахӑрать, алӑ тӑратсан алла касса каяссӑн туйӑнать.* (Хв.Уяр.) |
| Интонаципе уйрӑмлатакан сӑмахсем хӑйсем умӗнчи сӑмахсен пӗлтерӗшне уҫса параҫҫӗ, тӗрӗслетсе кӑтартаҫҫӗ. | *Вӑл утланнӑ лашана тӳнтер кӗрӗк тӑхӑнса хӑратнӑ ача,* ***Васук тусӗ****, ун патне халь ура ярса та пусман.* (Хв.Уяр.) |
| Интонаципе уйрӑмлатни ҫеҫ пӗр сӑмаха тепринпе ҫыхӑнма май парать. | *Пӗр ҫын кӑна —* ***кукамай*** *— ман кӑмӑл-туйӑма, ӑс-пуҫа нумай пуянлатрӗ.* (В. Петров.) |

## Уйрӑмлатнӑ сӑмахсен ҫыхӑнӑвӗ

| Предложенин хӑш членӗпе ҫыхӑнать | Тӗслӗхсем |
|---|---|
| 1 | 2 |
| Подлежащипе (е унӑн ушкӑнӗпе) | ***Микка, пӗрмаях чир-чӗрпе асапланаканскер,*** *пит имшеркке ӳсет.* (С.Аслан.) |

| 1 | 2 |
|---|---|
| Сказуемăйпа (е унăн ушкăнĕпе) | *Лида кĕнекесем, тетрадьсем хурса тултарнă сĕтел умĕнче* ***тăрать — хура вăрăм платйĕпе, кăвак тутăрпа.*** (А.Артемьев.) |
| Дополненипе (е унăн ушкăнĕпе) | *Çав çăкăр-тăварпа сĕтел хушши* ***пире, ватăсене,*** *яланах хапăл пултăр.* (Г.Ефимов.) |
| Обстоятельствăпа (е унăн ушкăнĕпе) | ***Ту сĕвеклĕхĕнче, йăмрапа хурăнсен сулхăнĕнче,*** *чĕр кĕмĕл пек шăнкăртатса юхать шурă чул айĕнчен тапса тăракан çăл шывĕ.* (Г.Ефимов.) |

## Уйрăмлатнă сăмахсене чарăну паллисемпе уйăрасси

| Чарăну палли лартасси | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятой е тире лартса уйăраççĕ. | *Чикĕ леш енчи мул хуçисен тарçисем —* ***наркăмăш чĕлхеллĕ сутăнчăк çыравçăсем*** *— пиртен куçăнах мăшкăллатчĕç.* (А.Ĕçхĕл.) *Ухтиван килтен тухса кайнă çулхи кĕркунне,* ***пĕр тĕттĕм каçхине,*** *Яриле старик уй варрипе ялалла юрттарса пынă.* (Хв. Уяр.) |
| Хăш чухне шухăш уçăмлăхĕшĕн предложенин пĕр-пĕр сыпăкне умĕнхи сăмахсенчен уйрăмлатса каланă чух çав сыпăк умне тире лартаççĕ, хыççăн нимĕн те лартмаççĕ. | *Чирлĕ Хветуç хăйĕн ывăлĕсем —* ***хăйĕн телейĕ*** *çине пăхса пĕр-икĕ хутчен вăйсăррăн кулса илчĕ.* (Л.Агаков.) |
| Тепĕр чух предложенин сыпăкĕсене интонаципе уйрăмлатса та, уйрăмлатмасăр та калама юрать. Уйрăмлатсан запятой лартмалла, уйрăмлатмасан — лартмалла мар. | *Вăрман урлă каçнă чух Çемене хăйсен кӳршĕ хĕрарăмĕ,* ***Варук инке****, пушă лавпа хуса çитрĕ.* (А.Артемьев.) |

## Кӳртĕм сăмахсемпе предложенисем

Калаканĕ хăйĕн шухăшне мĕнле хакланине (çирĕплетнине, иккĕленнине, кăмăлланине т.ыт.те.) палăртакан сăмахсене **кӳртĕм сăмахсем** теççĕ.

### Кӳртĕм сăмахсен пĕлтерĕшĕ

| Пĕлтерĕшĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Калаканни хăй шухăшĕ çине епле пăхни (çирĕплетни, иккĕленни, кăмăллани т.ыт. те) | ***Тен***, *вăл аслисенчен те ытла ĕçлет пуль.* (Хв.Уяр.) ***Шел***, *сурăхĕ лайăхчĕ: улаччĕ, йăвашчĕ, кĕтӳрен таврăннă-таврăнман Палюк аллине пырса шăршлатчĕ.* (Хв.Уяр.) |
| Шухăша пĕтĕмлетнине палăртни | ***Тӳррипе каласан***, *аслă тухтăрне те мĕн те пулин памаллаччĕ ĕнтĕ.* (Хв.Уяр.) |
| Шухăш йĕркине палăртни | *Валентин паян калама çук телейлĕ, мĕншĕн тесен, **пĕрремĕшĕнчен**, вăл халĕ çак ирĕклĕ çĕр çинче, **иккĕмĕшĕнчен**, хăйĕн юратнă ĕçне тума пултарать.* (А.Артемьев.) |
| Сăмах е шухăш камран тухнине палăртни | ***Эп астăвасса***, *Шупашкар урамĕнче пĕр харăс икĕ-виçĕ çынран ытла çӳреместчĕ...* (Хв.Уяр.) |

### Кӳртĕм сăмахсемпе предложенисене чарăну паллипе уйăрасси

| Чарăну палли лартасси | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1 | 2 |
| Сказуемăй умĕн тăракан кӳртĕм сăмахсене запятойпа уйăраççĕ. | ***Чăн та***, *иксĕмĕр те çамрăк, пурнăç тĕпелне иртсе курман, ун кĕрекине ларса курман-ха.* (А.Артемьев.) |
| Сказуемăй хыççăн унпа юнашар тăракан кӳртĕм сăмахсене запятойпа уйăрмаççĕ. | *Самоходка çурт умнех килсе чарăннă **иккен**.* (А.Артемьев.) |

ч-41884-03
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

| 1 | 2 |
|---|---|
| Кӳртӗм предложенисене икӗ енчен те запятой е тире лартса уйӑраҫҫӗ е скобкӑна хупаҫҫӗ. | *Ваҫука хӑнана чӗнмесен те* ***(хӑнасем тӑрӑх ҫӳреме ҫамрӑкха вӑл)*** *пӗри те тепри кӗрсе тухма йыхӑраҫҫӗ.* (Хв.Уяр.) |
| Кӳртӗм сӑмахсем предложенин пӗр-пӗр кӗҫӗн членӗпе ҫыхӑннӑ чух вӗсене ҫав кӗҫӗн членӗпе пӗрле предложенири ытти сӑмахсенчен запятойпа уйӑраҫҫӗ. | *Укол тунӑ хыҫҫӑн* ***пулас,*** *аманнӑ ҫын вӑрӑммӑн сывласа ячӗ.* (Л.Агаков.) |
| Кӳртӗм предложение уйрӑм предложени пек йӗркеленӗ чух ӑна скобкӑна хупаҫҫӗ, чарӑну паллине скобка ӑшне лартаҫҫӗ. | *Такам ӑна пуҫӗнчен ҫатлаттарнӑ.* ***(Тен, пан улмийӗ улмуҫҫи тӑрринчен ҫапла ӳкнӗ.)*** (Хв. Уяр.) |
| Кӳртӗм сӑмахсем предложени шухӑшӗпе пӗтӗмӗшлӗн ҫыхӑннине кӑтартма сказуемӑй хыҫҫӑн унпа юнашар тӑнӑ чух та вӗсене запятойпа уйӑраҫҫӗ. | *Урхи мучи, пар-ха хӑвӑнне, сан хӑватлӑ пулаканччӗ, пӗрер туртса ярар-ха,* ***эппин.*** (А.Артемьев.) |

## Чӗнӳ (обращени)

**Чӗнӳ** — кама е мӗне чӗнсе каланине пӗлтерекен сӑмах. Вӑл нимӗнле члена та пӑхӑнмасть, нимӗнле ытура та тӑмасть. Тытӑмӗ енчен ансӑр тата анлӑ пулать.

| Ансӑр | Анлӑ |
|---|---|
| *Эсӗ,* ***мӑнукӑм,*** *ҫынсем патне кай та вӗсене телей мӗнле тупмаллине, сивве яланлӑхах мӗнле ҫӗнмеллине каласа кӑтарт.* (Юхма М.)<br><br>*Эй,* ***аттеҫӗм,*** *ҫамрӑк чух*<br>*Мӗншӗн патӑр хӗрӗре?*<br>*Пуянлӑхра анчах мар,*<br>*Ыр курасси ҫыннинче.*<br>(К.Иванов.) | ***Пӗчӗк ывӑлӑм Ванюш,*** *куншӑнах пуҫна ан ус.* (Л.Сарине.)<br>***Асамат кӗперӗ,*** *савӑнтар пире.* (И.Чермаков.)<br><br>***Сӗм-сӗм вӑрман,*** *сӗм вӑрман,*<br>*Мӗншӗн хытӑ шавлатӑн?*<br>*Мӗншӗн шӑй-шай шӑхӑрса*<br>*Мӗскӗн чуна хӑрататӑн?*<br>(К.Иванов.) |

### Чĕнӳ пулăвĕ

| Мĕнле сăмахсенчен пулать | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Çынна пĕлтерекен сăмахсенчен | *— Ан кулян,* ***анне****, ан пăшăрхан, — терĕ Олег хуллен. — Хам тĕрĕс мар тунине йăлтах ăнлантăм.* (А.Лазарева.) *Çавах та мĕн пĕлес килет сирĕн,* ***тăванăм****, мĕншĕн канăҫа çухатнă?* (Г.Ефимов.) |
| Тĕрлĕ япаласемпе пулăмсене палăртакан сăмахсенчен | ***Ырлăх!*** *Мĕн тери тăнăç та таравăт* ***тӳпе!*** *Пăхса тăранайми* ***инçет! Шăплăх та лăпкăлăх! Виçесĕрлĕх!*** (В.Алентей.) |
| Çын ячĕсенчен | *Ватăлтăм эпĕ,* ***Андрей Васильевич****, сасартăках ватăлса лартăм. Вун çиччĕре те мар пек туятăп хама кас-кас.* (Г.Ефимов.) *Çул çинче хăрушă мар-и,* ***Ухатер пичи?*** (Хв.Уяр.) |

### Чĕнĕвĕн предложенири вырăнĕ

| Предложени пуçламăшĕнче | Предложени варринче | Предложени вĕçĕнче |
|---|---|---|
| ***Кĕçени****, мĕн калаçатăн эсĕ, лăплан-ха, тархасшăн.* (Х.Акивер.) ***Сĕм вăрман****, сан ырлăхна ытарма çук! Тав сана.* (Г.Ефимов.) | *Пăрăн,* ***чиперкке****, алăк çумĕнчен, пурпĕрех эсĕ тăвас тенĕ пек пулмасть...* (А.Артемьев.) *Тух,* ***савни****, чечек парнелĕп, чечекпе пĕрле — чуна.* (А.Лукин.) | *Асту, йывăççем нумайрах лартма тăрăш,* ***тусăм.*** (В.Алентей.) *Мухтав сана,* ***тертлĕ Хура çăкăр!*** *Мухтав сана,* ***тырă ăсти!*** (А.Воробьев.) |

## Хутлă предложени

**Хутлă предложени** — икĕ е ытларах хутсăр предложенирен тăракан пĕрлĕх. Хутлă предложенисене çыхăну мелне пăхса ушкăнлаççĕ: союзсăр хутлă, сыпăнуллă хутлă, пăхăнуллă хутлă предложенисем.

## Хутлă предложени тĕсĕсем

| Предложени тĕсĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| **Союзсăр хутлă предложени** — хутсăр предложенисем интонаципе çыхăннă пĕрлĕх. | *Пĕрисем купăспа ушкăнăн-ушкăнăн иртсе каяççĕ, теприсем пĕр вырăна пухăнса тăнă та такмакласа ташша илтереççĕ.* (Г.Ефимов.) |
| **Сыпăнуллă хутлă предложени** — хутсăр предложенисем сыпăнуллă союзсемпе çыхăннă пĕрлĕх. | *Сана эпĕ хамăн мĕнпур шалу укçине парса тăрăп,* ***анчах*** *эсĕ мана каялла илсе ан кай.* (С.Элкер.) *Вăл уйрăм ларакан ăвăс айне тарса кĕме хăтланчĕ* ***те,*** *сывлăш хумĕ пачах урăх еннелле сулăнтарса ячĕ.* (Д.Гордеев.) |
| **Пăхăнуллă хутлă предложени** — хутсăр предложенисем пăхăнуллă союзсемпе, союзла сăмахсемпе, хыç сăмахсемпе, аффикссемпе, вырăнĕ-йĕркипе çыхăннă пĕрлĕх. | *Вăл çăварне тутăр вĕçĕпе хуплане* ***пулин те*** *ӳсĕрнĕ сасă чылай аякра илтĕннĕ.* (Л.Агаков.) *Йăван таврăннă* ***чух*** *унăн пӳртĕнче кӳршĕ çамрăкĕ Павăл тата Муççа ывăлĕ Ванеç «Хыпар» хаçат вуласа лараççĕ.* (С.Элкер.) |

## Сыпăнуллă хутлă предложени

**Сыпăнуллă хутлă предложени** тесе сыпăнуллă союзсемпе çыхăнакан хутсăр предложенисен пĕрлĕхне калаççĕ. Сыпăнуллă хутлă предложение кĕрекен хутсăр предложенисем пĕр-пĕрне ăнлантармаççĕ, пĕри теприне пăхăнмасть, вĕсем сыпăнуллă çыхăнура тăраççĕ.

### Сыпăнуллă хутлă предложенисен тĕсĕсем

| Предложени тĕсĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1 | 2 |
| **Сыпăнтаракан союзлă (та(те), тата)** сыпăнуллă хутлă предложени. | *Эпир кашниех ăна тав тăватпăр* ***та****, пурте пĕрле пӳрте кĕпĕрленсе кĕретпĕр.* (А.Талвир.) |

| 1 | 2 |
|---|---|
| **Хирĕçлекен союзлă (анчах, çапах, унсăрăн, атту, ахальлĕн)** сыпăнуллă хутлă предложени. | *Унтанпа вăхăт чылай иртрĕ,* ***анчах*** *Василий Квасов аллине нимĕнле пысăк ĕç те лекмен-ха.* (П.Афанасьев.) |
| **Уйăракан союзлă (пĕрре—теппре, те—те, е, е—е)** сыпăнуллă хутлă предложени. | ***Те*** *такам кăларса илнĕ ăна,* ***те*** *паçăр урампа хытă чупнă чух кăларса ӳкерсе хăварнă.* (Л.Агаков.) |

## Сыпăнтаракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисем

| Союзсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| **Та (те)** | *Тепĕр чух васкавлă ĕçсем пулатчĕç* ***те****, вун-вун ик сехет хушши те тăраттăм машина патĕнче.* (Л.Агаков.) |
| **Тата** | *Çăлтăрсем йăлтăртатаççĕ,* ***тата*** *çĕн уйăх çурла пек курăнса тăрать.* (Л.Агаков.) |

## Хирĕçлекен союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисем

| Союзсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| **Анчах** | *Вăл чăвашла аван калаçать,* ***анчах*** *унăн çемçен тухакан сăмахĕсенче вырăс чĕлхи акценчĕ палăрать.* (Ç.Элкер.) |
| **Çапах** | *Витнĕ йĕтем çинче паçăрах тĕттĕмленчĕ,* ***çапах*** *çынсем хунар çутипе те пулин авăн çапаççĕ.* (А.Артемьев.) |
| **Унсăрăн** | *Пур çĕре те хамăн çитмелле,* ***унсăрăн*** *йĕрке пулмасть.* (А.Артемьев.) |

## Уйăракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисем

| Союзсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1 | 2 |
| **Те—те** | ***Те*** *сывлăм вăйлă ӳкнĕ,* ***те*** *çумăр çуса кайнă.* (Л.Агаков.) |
| **Е—е** | ***Е*** *шартлама сивĕ тăрать,* ***е*** *тапхăр-тапхăр тăман кутăн-пуçăн çаврăнать.* (Г.Орлов.) |

| 1 | 2 |
|---|---|
| **Пĕрре—тепре** | *Левенĕн шурă вăрăм пўрнисем клавишсем тăрăх* ***пĕрре*** *питĕ хăвăрт вĕлтĕртетсе чупаççĕ,* ***тепре*** *вăл вăраххăн, меллĕн темиçе аккорд илсе харăс-харăс пусать.* (А.Артемьев.) |
| **Ни—ни** | *Кĕнекен пĕр хĕррине çеç тĕксе пăхнипе Хветутăн* ***ни*** *ăшĕ канмасть,* ***ни*** *кĕнекин вăрттăнлăхне пĕлмест вăл.* (Хв.Уяр.) |

## Сыпăнуллă хутлă предложенири шухăш çыхăнăвĕсем

| Çыхăну тĕсĕсем тата вĕсене палăртакан союзсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Хутсăр предложенисем умлăн-хыçлăн е пĕр вăхăтра пулса иртекен ĕçсемпе пулăмсене сăнлани. **Та (те), тата.** | *Пирĕн палатăран пĕри килне тухса кайрĕ* ***те****, ун вырăнне çав кунах çĕнĕ çынна килсе ячĕç.* (А.Талвир.) |
| Хутсăр предложенисем хирĕçлев пĕлтерĕшне (хăш-пĕр чух мĕнле те пулин хушма сĕме) палăртни. **Анчах, çапах, ахальлĕн, атту, унсăрăн.** | *Кăмăлласа кулни мана кăштах лăплантарчĕ,* ***çапах*** *эпĕ çав кулла хăнăхса çитеймерĕм-ха.* (А.Артемьев.) |
| | *Кăçал çуркунне сухан та пулин лартса хăварасшăнччĕ карчăк,* ***анчах*** *йăранне пусма хевте çитеймерĕ.* (В.Петров.) |
| Пĕр хутсăр предложенири ĕç е пулăм тепĕр предложенири ĕçĕн результачĕ пулнине кăтартни. **Та (те).** | *Эпĕ пĕр хыпарсăр çухалтăм* ***та*** *— вăл сан çураçнă хĕрў пулса тăчĕ.* (А.Артемьев.) |
| Хутсăр предложенисем икĕ е темиçе ĕçрен пĕри пурнăçланмаллине, çав ĕçсенчен пĕрин çинче чарăнмаллине кăтартни. **Е—е, те—те.** | ***Те*** *çыннисем пахчисене çырма хĕрринелле тăснă,* ***те*** *çырми пахча картисем çумне сĕвеннĕ.* (В.Элпи.) |
| Хутсăр предложенисем умлăн-хыçлăн улшăнса пыракан ĕçсене палăртни. **Пĕрре—тепре.** | ***Пĕрре*** *чухăнсем çĕнтерсе пыма тытăнаççĕ пек,* ***тепре*** *пуянсем усалтарах кăшкăраççĕ.* (Юхма М.) |

### Сыпăнуллă хутлă предложенисенче чарăну паллисем лартасси

| Чарăну палли | Чарăну палли лартмалли условисем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| Запятой | Хутсăр предложенисем пĕр вăхăтра е умлăн-хыççăн пулса иртекен ĕçсене сăнлаççĕ. | *Тӳпе маччи ерипен хĕрелсе-хĕрелсе пычĕ* **те,** *вăрман тăррисене вут хыпса илчĕ.* (Г.Ефимов.) |
| Тире | Хутсăр предложенисем хирĕçле пĕлтерĕшлĕ пулсан. | *Тăшман салтакĕсем тепĕр хут çĕкленме тăчĕç* **те** *— çав вăхăтра сылтăм енче совет танкĕсем курăнса кайрĕç.* (А.Артемьев.) |
| | Хутсăр предложенисенчи ĕçсем хăвăрт е кĕтмен çĕртен пулнине палăртаççĕ. | *Юсаса е туса хăварнă хыççăн кăмакана хутса пăхаççĕ* **те** *— тĕтĕмĕ мăрьерен мар, кăмака çăварĕнчен тухать е арçури пек шăхăрать.* (Г.Ефимов.) |
| | Хыççăнхи хутсăр предложенири ĕç умĕн тăраканнин результачĕ е следствийĕ пулнине кăтартать. | *Пичĕ тăсăкларах* **та** *— сăмси те, çамки те, янахĕ те пĕчĕк тутипе виçеллĕ, килĕшӳллĕ.* (Ю.Скворцов.) |

## Союзсăр хутлă предложени

**Союзсăр хутлă предложенири** хутсăр предложенисем пĕр-пĕринпе интонаци пĕрлĕхĕпе çыхăнаççĕ, вĕсем хушшинчи пĕлтерĕш уйрăмлăхĕсене те интонаци палăртать. Хутсăр предложенисем пĕлтерĕш енчен мĕнле çыхăннине кура союзсăр хутлă предложенисем е сыпăнуллă хутлă предложение, е пăхăнуллă хутлине аса илтереççĕ. Т ĕ с л ĕ х р е н: *Нихăшĕ те пĕр сасă кăларса ĕлкĕреймерĕ: пурте питĕ хăвăрт пулса иртрĕ.* (Н.Симунов.) Ку предложени пăхăнуллă хутлине аса илтерет, мĕншĕн тесен иккĕмĕш пайĕ (*Пурте питĕ хăвăрт пулса иртрĕ)* пĕрремĕш пайне ăнлантарса парать. Пайĕсем

хушшине ***мӗншӗн тесен*** союз лартма пулать. *Туратсем хушшине эрешмен карти карӑннӑ, унӑн кашни ҫиппинче кӗмӗл хӗм янӑрать* предложенин пайӗсем сыпӑнуллӑ хутлӑ предложени пайӗсем пек ҫыхӑннӑ, вӗсем хушшине ***та*** союз лартма пулать.

**Союзсӑр хутлӑ предложенисенче чарӑну паллисем лартасси**

| Чарӑну паллисем | Чарӑну палли лартмалли условисем | Тӗслӗхсем |
|---|---|---|
| Запятой | Хутсӑр предложенисем пӗр евӗрлӗрех ӗҫсене е пулӑмсене сӑнлаҫҫӗ. | *Правлени ҫурчӗн чӳречисем пӗр вӑхӑт хӗмленсе йӑлкӑшрӗҫ, унтан вӗсем тӗксӗмленсе хуралчӗҫ.* (Л.Агаков.) |
| Икӗ точка | Хутсӑр предложенисенчен пӗри теприне мӗн енчен те пулин ӑнлантарать. | *Тӑван ҫӗршывран аякра пурӑнакан салтаксен йӑли ҫапла вӑл: пӗр енчи ҫынсене тӗл пулсан яланах хӑйсен ҫӗршывӗ ҫинчен юратса асӑнаҫҫӗ.* (А.Артемьев.) |
| Тире | Хутсӑр предложенисенчи ӗҫсем пӗрин хыҫҫӑн тепри хӑвӑрт е кӗтмен ҫӗртен пулса иртнине кӑтартаҫҫӗ. | *Сержант каласа та пӗтерейменрӗ— пӳлӗм стенисем витӗр снаряд ҫурӑлмасӑр шӑхӑрса тухса кайрӗ.* (А.Артемьев.) |
| | Хутсӑр предложенисем пӗр-пӗрне хирӗҫлеҫҫӗ. | *Кун хыҫҫӑн кун, эрне хыҫҫӑн эрне иртрӗ — дивизи ҫав-ҫавах вырӑнтан хускалман-ха.* (С.Павлов.) |
| | Хутсӑр предложенисем следстви, услови е результат, вӑхӑтпа результат пӗлтерӗшӗсемпе ҫыхӑнаҫҫӗ. | *Хӳхӗм хӗрӗн хӗрлӗ сӑнӗ шуралнӑҫемӗн шуралса пынӑ, сарӑ кӑтрисем кӑвакарнӑ — вӑл вӑхӑтсӑр ватӑла пуҫланӑ.* (А.Артемьев.) |
| Точкӑпа запятой | Хутсӑр предложенисен калӑпӑшӗ пысӑк тата вӗсен ӑшӗнче запятойсем пулаҫҫӗ. | *Шӑрантарса пӑхакан хӗвел ӑшшинче пӗтӗм ҫут ҫанталӑк чӗрӗлнӗ; юр айӗнчен тухнӑ ҫӗр пӑсланса выртать, сукмак хӗррипчи ҫӗлен калчи ҫемҫешке симӗс чӗлхине кӑларнӑ.* (Ю.Скворцов.) |

## Пăхăнуллă хутлă предложени

**Пăхăнуллă хутлă предложени** тесе хутсăр предложенисем пăхăнуллă çыхăнура тăракан хутлă пĕрлĕхе калаççĕ. Пăхăнуллă хутлă предложенире тĕп тата пăхăнуллă предложенисем пур. Пăхăнуллă предложени тĕп пайне мĕн енчен те пулин ăнлантарса парать, ăна пăхăнать. Унăн ыйтăвĕ тĕп пайĕнчен тухса тăрать. Çыхăну мелĕсем яланах пăхăнуллă предложенире пулаççĕ. Пăхăнуллă предложени тĕп пайĕ умĕн, хыççăн, ун варринче тăма пултарать. Тĕп предложени пăхăнулли ăшне кĕрсе лараймасть, пăхăнулли тĕп пайĕн варринче пулма пултарать.

Пăхăнуллă хутлă предложенисене (ПХП) çыхăну мелĕсене пăхса ушкăнлаççĕ: 1) союзлă ПХП; 2) союзла сăмахлă ПХП; 3) хыç сăмахлă ПХП; 4) аффикссемлĕ ПХП; 5) пайĕсем вырăнĕ-йĕркипе çыхăннă ПХП.

**Пăхăнуллă хутлă предложенисен ушкăнĕсем**

| ПХП тĕсĕсем | Çыхăну мелĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1 | 2 | 3 |
| Союзлă пăхăнуллă хутлă предложенисем | Пăхăнуллă союзсем: **тесе, тесен, пулсан, пулсан та, пулин те; ешĕл, ехер, хуть (хăть), тăк (тĕк), мĕншĕн тесен** | *Вăрçă тухман **пулсан** епле чаплă туй кĕрленĕ пулĕччĕ кĕçĕр пирĕн ялта.* (З.Нестерова.) |
| Союзла сăмахлă пăхăнуллă хутлă предложенисем | Союзла сăмахсем: **кам, мĕн, ăçта, хăçан, мĕншĕн** т. ыт. те | ***Кам** нумай вулать, вăл нумай пĕлет. Йĕппи **ăçта**, çиппи çавăнта.* (Ват. сăм.) |
| Хыç сăмахлă пăхăнуллă хутлă предложенисем | Хыç сăмахсем: **чух, хыççăн, çинчен, пек, евĕр, май, тĕле, çĕре, валли** т. ыт. те | *Кируш пасартан тăвалла урампа ярмăрккă енне хăпарнă **май** вăл ĕнер хăйпе пĕрле çĕр выртнă икĕ яштака çынна тĕл пулчĕ.* (А.Талвир.) |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| Пайĕсене аффикссемпе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложенисем | Падеж тата деепричасти аффиксĕсем, **-и** аффикс | *1) Çурхи ешĕл калча пусси урлă ансăр сукмакпа вăрман еннелле утнă чух симĕс грузовик çул варрипе вĕçтернине куртăм.* (А.Талвир.) *2) Кашкăрĕ куçран çухал**сан** тин хытса ларнă чĕлхе хускалчĕ.* (М.Кипек.) *3) Савăл сухаллă янахĕ чалăшшăн çĕкленсе пĕр енчен тепĕр енне пăркаланн**и** Кируша мăнаçлă хур аçине аса илтерчĕ.* (А.Талвир.) |
| Пайĕсене вырăнĕ-йĕркипе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложенисем | Пайĕсен вырăнĕ-йĕрки | *Рая шкулти ăсату каçĕ валли аппăшĕ укаллă пурçăнран çĕленĕ кĕпине утюгпа якатма пуçларĕ.* (Л.Сачкова.) |

## Пăхăнуллă предложенисене пĕлтерĕш енчен ушкăнлани

| Пăхăнуллă предложенисен тĕсĕсем | Ыйтăвĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|---|
| 1 | 2 | 3 |
| Подлежащи пулакан ПП | Подлежащи ыйтăвĕсем | ***Мĕн акатăн,*** (мĕн шăтать?) *çав шăтать.* (Ват. сăм.) ***Машина кĕтмен çĕртен килсе тухни*** (мĕн татрĕ?) *Ванюшка шухăшĕсене татрĕ.* (Л.Агаков.) |
| Сказуемăй пулакан ПП | Сказуемăй ыйтăвĕсем | ***Çини мĕнле,*** *(*ĕçлени мĕнле?) *ĕçлени çавнашкал.* (Ват. сăм.) |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| Дополнени пулакан ПП | Дополнени ыйтăвĕсем | *Ыйхăран шарт сиксе вăраннă пек туртăнса илетĕп те* ***хамăр паталла икĕ аркăллă вăрăм кĕпе тăхăннă хĕрарăм уксахласа килнине*** (мĕне куратăп?) *куратăп.* (К.Турхан.) |
| Определени пулакан ПП | Определени ыйтăвĕсем | *Тăна кĕме ĕлкĕрнĕ Иванкка* ***вĕçĕмсĕр ахлатса пĕр вырăнта çаврăнса çӳрекен старик пăрахнă*** (мĕнле чула?) *чула çатăрласа тытрĕ.* (Юхма М.) |
| Обстоятельство пулакан ПП | Обстоятельство ыйтăвĕсем | ***Саламп иккĕмĕш бригада уйне пырса кайнă хыççăн*** (хăçан туйрĕ?) *Андрей хăйне чи телейлĕ çын пек туйрĕ.* (А.Артемьев.) |

## Пăхăнуллă хутлă предложенисенче чарăну палли лартасси

| Чарăну палли лартасси | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1 | 2 |
| Союзла сăмахсемпе, **мĕншĕн тесен** союзпа çыхăнакан пăхăнуллă предложенисене тĕп предложенирен запятой лартса уйăраççĕ. | ***Кам*** *хура-шур курман, вăл çын хуйхисуйхине ăнланмасть.* (Ват.сăм.); *Эпĕ хирĕç нимĕн те калаймастăп,* ***мĕншĕн тесен*** *хитрелĕх çинчен калаçма, уйрăмах ăна аста куçĕпе пахалама е тиркеме чăн-чăнах хитре çын кăна пултарать.* (Ю.Скворцов.) |
| Ытти союзсемпе е хыç сăмахсемпе, е урăх мелсемпе çыхăнакан пăхăнуллă предложенисене хутлă предложени пĕлтерĕшĕ ыйтман чухне тĕп предложенирен запятойпа уйăрмаççĕ. | *Аякранах курăнса хăратса тăтăр* ***тесе*** *Ивук унăн хуппине те каçах шуратса хучĕ.* (Хв.Уяр); *Ыратни иртсе* ***кайиччен*** *Ванюшка ним чĕнмесĕр мăччаналла пăхса выртрĕ.* (Л.Агаков.) |

| 1 | 2 |
|---|---|
| Пăхăнуллă хутлă предложенири хăш-пĕр сăмахсем хутлă пĕрлĕхĕн хăш пайне кĕнине кăтартма кирлĕ чухне пăхăнуллă хутлă предложение тĕп предложенирен запятойсемпе уйăраççĕ. | ***Каçхине**, виçĕ утăмран çынна паллайми тĕттĕмленсен, Актаев урама тухрĕ.* (А.Артемьев.) |
| Пăхăнуллă предложенипе тĕп предложени хушшине вĕсен иккĕшĕн те сказуемăйĕсем ***-и*** аффикс йышăннă чухне тире лартаççĕ. | *Ыратсассăн тем те калăн: юн **юхни** — шыв **юхни мар**.* (П.Хусанкай.) |
| Пĕлтерĕшпе пăхăнуллă предложенипе тĕп предложение иккĕшне те ăнлантаракан сăмахсене пăхăнуллă предложенирен запятойпа уйăрмаççĕ, тĕп предложение кăна ăнлантараканнисене уйăраççĕ. | *Кун пек çынсем, **çил хăш енелле хытăрах вĕрет**, çавăнталла тайăлаççĕ.* (Хв.Уяр.) |

## Пăхăнуллă предложенин хутлă пĕрлĕхри вырăнĕ

| Вырăнĕ | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Тĕп предложени умĕнче | ***Йĕтем çинчи халăх киле кайса пĕтсен** Петр Михалч пĕрпĕчченех çулне-йĕрне пăхмасăрах килнелле танккарĕ.* (А.Артемьев.) |
| Тĕп предложени варринче | *Ванюшка каялла пăхрĕ те **нимĕç салтакĕсем халăх çинелле пынине** курчĕ.* (Л.Агаков.)<br>*Амăшĕ **вĕсем хытă чĕреллĕ этемсем пулнине** ял-йыша пĕлтерсе намăс курас темест-тĕр.* (В.Петров.) |
| Тĕп предложени хыçĕнче | *Никам та ас тумасть **вĕсене авал кам лартса хăварнине**.* (Т.Петров.) |

## Хутлă предложенири хутсăр предложенисем тĕрлĕ мелпе çыхăнни

| Предложени тĕсĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| Хутсăр предложенисем тĕрлĕ çыхăнура тăракан **сыпăнуллă хутлă предложени.** | *Хăвапа йăмрана тасатнă хыççăн пĕрик çултан утравра ухлĕм курăк кашласа ӳсессе[1] пурте пĕлеççĕ,[2]* ***анчах*** *халĕ çынсем[3] утрав малашне пысăк тупăш парасси çинчен[4] шухăшламарĕç.[3]* (Н.Мранька.)<br>I: [(1) → [2]] , *анчах* II: [3 (4) 3] |
| Хутсăр предложенисем тĕрлĕ çыхăнура тăракан **союзсăр хутлă предложени.** | *Эпĕ сĕрме купăс каланă чух[1] Наçтук ман çинчен куç илмесĕр итлет,[2] эпĕ хурлăхлă кĕвĕ каласан[3] унăн хăмăртарах куçĕсем куççульпе тулаççĕ.[4]* (А.Артемьев.)<br>I: [(1) → [2]] , II: [(3) → [4]] |
| Кăткăс **пăхăнуллă хутлă предложени.** | *Качча çăвăнса тасалчĕ,[1] Селиме панă[2] тĕрĕллĕ кĕпине, çĕнĕ шăлаварĕпе пиншакне тăхăнчĕ, çиелтен тата тепĕр пиншак уртса ячĕ,[1] каç тĕттĕмĕ çывхарсан[3] урама тухрĕ.* (Илпек М.)<br>[1 (2) 1 (3) 1] |

## Тӳрĕ тата тӳрĕ мар пуплевлĕ предложенисем. Урăх çын сăмахĕсене палăртмалли мелсем

| Тĕсĕсем | Тĕслĕхсем |
|---|---|
| 1 | 2 |
| Тӳрĕ пуплевлĕ предложенисенче урăх çын сăмахĕсене ним улăштармасăр калаççĕ. | *Старик ăна илтмĕш пулчĕ, чĕлĕмне паклаттарса шăл витĕр каларĕ:* ***«Аçу та хăй ĕмĕрне хăмла картинче ирттерчĕ».*** (А.Артемьев.) |

| 1 | 2 |
|---|---|
| Тӳрӗ мар пуплевлӗ предложенисем калаҫу мӗн ҫинчен пынине палӑртаҫҫӗ. Урӑх ҫын сӑмахӗсем улшӑнма пултараҫҫӗ. | ***Кунта интереслӗ тӗлпулусем пулма пултарни ҫинчен*** *калаcа пачӗ Валентин.* (А.Артемьев.) |

**Тӳрӗ пуплевлӗ предложенисенче чарӑну палли лартасси**

| Тӳрӗ пуплевӗн вырӑнӗ | Чарӑну палли лартасси | Тӗслӗхсем |
|---|---|---|
| 1 | 2 | 3 |
| Тӳрӗ пуплев **автор сӑмахӗсем умӗнче.** | Тӳрӗ пуплев хыҫҫӑн ыйту палли е кӑшкӑру палли, е запятой тата тире лартаҫҫӗ. Тӳрӗ пуплеве кавычкӑна хупаҫҫӗ, автор сӑмахӗсене пӗчӗкрен пуҫласа ҫыраҫҫӗ. | *«Хамӑр ята ҫухатасран хӑранӑ пуль ҫав», — терӗ мана магазин хуралҫи Энтюш Валентинович.* (Хв.Уяр.) |
| Тӳрӗ пуплев **автор сӑмахӗсем хыҫӗнче.** | Автор сӑмахӗсем хыҫҫӑн икӗ точка лартаҫҫӗ, тӳрӗ пуплеве пысӑкран пуҫласа ҫыраҫҫӗ, ун вӗҫне ыйту палли, кӑшкӑру палли е точка лартаҫҫӗ. Тӳрӗ пуплеве кавычкӑна хупаҫҫӗ. | *Кунти чӑвашсем мӗншӗн тӗне кӗмесӗр юлнӑ тенине хирӗҫ шкул умӗнчи карчӑксем кулкалаcа ҫапла ответлерӗҫ:* ***«Эпир вырӑссем хӑйсем те тӗне кӗме пӑрахасса кӗтсе пурӑннӑ».*** (Хв.Уяр.) |
| Тӳрӗ пуплев **автор сӑмахӗсем варринче.** | Автор сӑмахӗсен пӗрремӗш пайӗ хыҫҫӑн икӗ точка лартаҫҫӗ, тӳрӗ пуплев хыҫҫӑн запятой, ыйту палли е кӑшкӑру палли тата тире лартаҫҫӗ. Тӳрӗ пуплеве кавычкӑна хупаҫҫӗ, автор сӑмахӗсене пӗчӗкрен ҫыраҫҫӗ, хыҫҫӑн икӗ точка лартаҫҫӗ. | *Ҫамрӑк тӑмани калать:* ***«Ак эпӗ ӑна хӑрах урапа ҫаклатам та тепринпе часрах йывӑҫран ярса тытам»****, — тет.* (И. Яковлев.) |

| 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|
| Автор сăмахĕсем **тӳрĕ пуплев варринче.** | Автор сăмахĕсем хутсăр е хутлă предложени пулакан тӳрĕ пуплеве татаççĕ пулсан тӳрĕ пуплевĕн пĕрремĕш пайĕ хыççăн запятойпа тире, тӳрĕ пуплевĕн иккĕмĕш пайĕ хыççăн точка, ыйту палли е кăшкăру палли лартаççĕ. Тӳрĕ пуплеве кавычкăна хупаççĕ. | «*Кун пеккине мар тӳснĕ,* — ***терĕ Актаев,*** — *Саксонире сахал мар чул ватнă*». (А.Артемьев.) |
| | Автор сăмахĕсем тӳрĕ пуплеври уйрăм предложенисем хушшинче тăраççĕ пулсан автор сăмахĕсем хыççăн точкăпа тире лартаççĕ, тӳрĕ пуплевĕн иккĕмĕш пайне пысăкран пуçласа çыраççĕ. Тӳрĕ пуплевĕн пĕрремĕш пайĕ хыççăн та, иккĕмĕш пайĕ хыççăн та тивĕçлĕ чарăну паллисем лартаççĕ. Тӳрĕ пуплеве кавычкăна хупаççĕ. | «*Эпир çапăçăпăр-ха,* — ***терĕ каччă кăнтăрлахи сăмахсене аса илсе.*** — *Е çĕнтерӳ пулĕ унта, е ...*». (А.Артемьев.) |

# СИНТАКСИС ТИШКЕРĔВĔ

## Сăмах майлашăвĕ.

## Сăмах майлашăвне тишкермелли йĕрке

1. Сăмах майлашăвĕн пуçламăш форми.
2. Тĕп тата пăхăнакан сăмахсем (пайĕсем). Сăмах майлашăвĕ ансăр-и, анлă-и?
3. Тĕп сăмахне кура хăш ушкăна кĕрет?
4. Пăхăнакан сăмахĕ (пайĕ) тĕп сăмахпа (пайпа) мĕнпе çыхăннă?

ТИШКЕРӲ ТĔСЛĔХĔСЕМ

*Çырма хĕрринчи тачка çăкан çулçисем каçхи вăйсăр çилпе чӳхенсе шĕпĕртетеççĕ.* (Н. Янкас.)

Ку предложенири **ансăр сăмах майлашăвĕсем:** *çырма хĕрринчи, тачка çăкан, вăйсăр çилпе, чӳхенсе шĕпĕртетеççĕ.*

**Анлă сăмах майлашăвĕсем:** *тачка çăкан çулçисем, çырма хĕрринчи тачка çăкан çулçисем, вăйсăр çилпе чӳхенсе шĕпĕртетеççĕ.*

### Ансăр сăмах майлашăвĕсене тишкерни

*Çырма хĕрринчи*
х
Мĕн?

Пуçламăш форма: *çырма хĕрри.* Тĕп сăмахĕ — *хĕрри* (я.я.), пăхăнаканни — *çырма* (я.я.). Ку ансăр ят сăмах майлашăвĕ, пăхăнакан сăмахĕ тĕп сăмахпа вырăнĕ йĕркипе тата камăнлăх формин **-и** аффиксĕпе çыхăннă.

*Тачка çăкан*
х
Мĕнле?

Пуçламăш форма: *тачка çăка.* Тĕп сăмахĕ — *çăка* (я.я.), пăхăнаканни — *тачка* (п.я.). Ку ансăр ят сăмах майлашăвĕ, пăхăнакан сăмахĕ тĕп сăмахпа вырăнĕ-йĕркипе çыхăннă.

*Вăйсăр çилпе*

х

Мĕнле?

Пуçламăш форма: *вăйсăр çил.* Тĕп сăмахĕ — *çил* (я.я.), пăхăнаканни — *вăйсăр* (п.я.). Ку ансăр ят сăмах майлашăвĕ, пăхăнакан сăмахĕ тĕп сăмахпа вырăнĕ-йĕркипе çыхăннă.

*Чӳхенсе шĕпĕртетеççĕ*

х

Мĕнле?

Пуçламăш форма: *чӳхенсе шĕпĕртет.* Тĕп сăмахĕ — *шĕпĕртет* (гл.), пăхăнаканни — *чӳхенсе* (гл., деепр.). Ку ансăр глагол сăмах майлашăвĕ, пăхăнакан сăмахĕ тĕп сăмахпа **-се** аффикспа çыхăннă.

## Анлă сăмах майлашăвĕсене тишкерни

*Тачка çăкан / çулçисем*

Пуçламăш формăра. Тĕп пайĕ — *çулçисем*, пăхăнаканни — *тачка çăкан.* Ку анлă ят сăмах майлашăвĕ. Тĕп пайĕ пăхăнакан пайĕпе **-н** тата **-и** аффикссемпе çыхăннă.

*Вăйсăр çилпе / чӳхенсе шĕпĕртетеççĕ*

Пуçламăш форма: *вăйсăр çилпе чӳхенсе шĕпĕртет.* Тĕп пайĕ — *чӳхенсе шĕпĕртет,* пăхăнаканни — *вăйсăр çилпе.* Ку анлă глагол сăмах майлашăвĕ. Пăхăнакан пайĕ тĕп пайĕпе **-пе** аффикспа çыхăннă.

## I. Хутсăр предложени

### Хутсăр предложение пĕтĕмĕшле хак памалли йĕрке

1) Предложени хутсăр пулнине палăртăр, тĕп членĕсене тупăр.

2) Каланин тĕллевне кура хăш ушкăна кĕрет?

3) Кăмăл-туйăм енчен мĕнле предложени (кăшкăрулла е кăшкăрулла мар) пулать?

4) Тытăмĕ енчен предложени хăш ушкăна кĕрет:

а) икĕ е пĕр тĕп членлă?

ă) ансăр-и, анлă-и?

б) тулли-и, тулли мар-и?

5) Чарăну палли лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсене ăнлантарăр.

ТИШКЕРӲ ТĔСЛĔХĔСЕМ

*Шурăмпуç çăлтăрĕ, пĕчĕкçĕ уйăх пек, симĕс мерчен пайăркасем ярсах çутатать.* (Ю. Скворцов.)

Ку хутсăр (подлежащи — *çăлтăрĕ*, сказуемăй — *çутатать*), калулла, кăшкăрулла мар, икĕ тĕп членлă, анлă, тулли предложени. Уйрăмлатнă (*пĕчĕкçĕ уйăх пек*) сăмахсене икĕ енчен запятойпа уйăрнă, мĕншĕн тесен танлаштару сăмахĕсем шухăш тăрăх хыççăнхи сăмахсемпе пĕтĕмĕшлĕн çыхăннă.

ПРЕДЛОЖЕНИЕ ЧЛЕНСЕМ ТĂРĂХ ТУЛЛИН ТИШКЕРНИ

Предложение тишкересси тĕп членсенчен пуçланмалла, унтан подлежащи тата сказуемăй ушкăнне кĕрекен кĕçĕн членсене тишкермелле.

*Мĕн? — çăлтăрĕ* — подлежащи, тĕп падежри, пĕрреллĕ хисепри япала ятĕнчен пулнă.

*Çăлтăрĕ мĕн тăвать? — çутатать* — сказуемăй, кăтарту наклоненийĕнчи, хальхи вăхăтри, пĕрреллĕ хисепри, виççĕмĕш сăпатри глаголтан пулнă.

*Мӗн ҫӑлтӑрӗ? — шурӑмпуҫ* — определени, тӗп падежри, пӗрреллӗ хисепри япала ятӗнчен пулнӑ.

*Мӗнле ҫутатать? — ярсах* — обстоятельство, глаголӑн сӑпатсӑр форминчен, деепричастирен пулнӑ.

*Мӗнсем ярсах ҫутатать? — пайӑркасем* — дополнени, тӗп падежри нумайлӑ хисепри япала ятӗнчен пулнӑ.

*Мӗнле пайӑркасем? — мерчен* — определени, тӗп падежри, пӗрреллӗ хисепри япала ятӗнчен пулнӑ.

*Мӗнле мерчен? — симӗс* — определени, паллӑ ятӗнчен пулнӑ.

*Мӗнле ҫутатать? — уйӑх пек* — обстоятельство, япала ячӗпе хыҫ сӑмах пӗрлешӗвӗнчен пулнӑ.

*Мӗнле уйӑх пек? — пӗчӗкҫӗ* — определени, паллӑ ятӗнчен пулнӑ.

## ПӖР ТӖП ЧЛЕНЛӐ ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ. ТИШКЕРӲ ТӖСЛӖХӖСЕМ

**1.** *Тӗрӗссипе, Вассан хӑйӗн те чӑн-чӑн пурнӑҫран юлас килмест.* (В. Алентей.)

Ку хутсӑр (тӗп членӗ — *юлас килмест* — сказуемӑй, глаголӑн сӑпатсӑр формипе (причасти) сӑпатлӑ глагол пӗрлешӗвӗнчен пулнӑ), калуллӑ, кӑшкӑруллӑ мар, пӗр тӗп членлӑ, подлежащисӗр, анлӑ, тулли предложени. Предложени пуҫламӑшӗнче тӑракан кӳртӗм сӑмах хыҫҫӑн запятой лартнӑ.

**2.** *Вутта вӑйсӑр чух сӳнтерме хушнӑ.* (Ват. сӑм.)

Ку хутсӑр (тӗп членӗ — *хушнӑ* — сказуемӑй, глаголӑн сӑпатсӑр форминчен, иртнӗ причастирен пулнӑ), калуллӑ, кӑшкӑруллӑ мар, пӗр тӗп членлӑ, подлежащисӗр, анлӑ, тулли предложени.

**3.** *Чул хапха.* (В. Алентей.)

Ку хутсӑр (тӗп членӗ — *хапха* — подлежащи, тӗп падежри пӗрреллӗ хисепри япала ятӗнчен пулнӑ), калуллӑ, кӑшкӑруллӑ мар, пӗр тӗп членлӑ, сказуемӑйсӑр, анлӑ, тулли предложени.

# II. Хутлă предложени

## 1. Сыпăнуллă хутлă предложени

### Сыпăнуллă хутлă предложение тишкермелли йĕрке

1) Предложени миçе хутсăр предложенирен тăрать? Вĕсен тĕп членĕсем.

2) Предложенисем мĕнле союзпа çыхăннă?

3) Чарăну палли лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсене калăр.

ТИШКЕРŸ ТĔСЛĔХĔСЕМ

**1.** *Кăнтăрла янкăр тăрă пĕлĕтре хĕвел йăлтăртатать, анчах унăн ăшши иксĕлнĕ ĕнтĕ.* (М. Трубина.)

Ку сыпăнуллă хутлă предложени, икĕ хутсăр предложенирен тăрать (тĕп членĕсем: подлежащи — *хĕвел,* сказуемăй — *йăлтăртатать;* подлежащи — *ăшши,* сказуемăй — *иксĕлнĕ*). Вĕсем пĕр-пĕринпе хирĕçлекен ***анчах*** союзпа çыхăннă. Сыпăнуллă хутлă предложенин пайĕсене пĕр-пĕринчен (***анчах*** союз умĕн) запятой лартса уйăрнă.

Предложенин схеми: [ 1 ], *анчах* [ 2 ].

**2.** *Хурăн çинчен сала кайăк чĕвĕлтетсе анчĕ те, пĕчĕк хăрăк турат хуçăлса кўлле чăмрĕ.* (П. Афанасьев.)

Ку сыпăнуллă хутлă предложени, икĕ хутсăр предложенирен тăрать (тĕп членĕсем: подлежащи — *сала кайăк,* сказуемăй — *анчĕ;* подлежащи — *турат,* сказуемăй — *чăмрĕ*). Вĕсем сыпăнтаракан *те* союзпа çыхăннă. Запятойне *те* союз хыççăн лартнă.

Предложенин схеми: [ 1 ] *те,* [ 2 ].

## 2. Пăхăнуллă хутлă предложени

### Пăхăнуллă хутлă предложение тишкермелли йěрке

1) Тěп тата пăхăнуллă предложенисене палăртăр, тěп членěсене кăтартăр.

2) Пăхăнуллă предложени тěп предложенипе мěнле мелпе (хыç сăмахпа, аффикспа, вырăнě-йěркипе, союзла сăмахпа, союзпа) çыхăннă?

3) Пăхăнуллă предложенин ыйтăвне, пěлтерěшне калăр. Вăл хăш ушкăна кěрет (подлежащи, сказуемăй, определени, дополнени, обстоятельство)?

4) Пăхăнуллă предложенин вырăнě (тěп предложени умěн, варринче е хыçěнче), тěп предложенипе мěнле (пěтěмěшлěн е тěп пайěнчи пěр-пěр сăмахпа е сăмахсен пěрлешěвěпе) çыхăннă?

5) Чарăну палли лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсене ăнлантарăр (пур пулсан).

ТИШКЕРŸ ТĚСЛĚХĚСЕМ

**1.** *Кěрхи çилпе вăрман кашлама тытăнсан*[1] *çулçăсем хăранă кайăксем пек пăлханаççě, вăрмантан явăнса вěçсе тухаççě*[2]. (М.Трубина.)

Ку пăхăнуллă хутлă предложени. Тěп предложени — *çулçăсем хăранă кайăксем пек пăлханаççě, вăрмантан явăнса вěçсе тухаççě* (тěп членěсем: подлежащи — *çулçăсем,* сказуемăйсем — *пăлханаççě, вěçсе тухаççě*). Пăхăнуллă предложени — *кěрхи çилпе вăрман кашлама тытăнсан* (тěп членěсем: подлежащи — *вăрман*, сказуемăй — *кашлама тытăнсан*). Пăхăнуллă предложени тěп предложенипе деепричастин ***-сан*** аффиксěпе çыхăннă, *хăçан пăлханаççě, вěçсе тухаççě?* ыйтăва хуравлать, вăхăта пěлтерет, обстоятельство ушкăнне кěрет, тěп предложени умěн тăрать, унпа пěтěмěшлěн çыхăнать. Предложенири союзсăр çыхăннă пěр йышши членсене (*пăлханаççě, вěçсе тухаççě*) запятой лартса уйăрнă.

Предложени схеми: (1) → [2] .

**2.** *Хур кайăксем Çавал патне çитнĕ чух*[1] *шăпах хĕвел хĕмленсе тухрĕ*[2]. (М. Кипек.)

Ку пăхăнуллă хутлă предложени. Тĕп предложени — *шăпах хĕвел хĕмленсе тухрĕ* (тĕп членĕсем: подлежащи — *хĕвел,* сказуемăй — *тухрĕ*). Пăхăнуллă предложени — *хур кайăксем Çавал патне çитнĕ чух* (тĕп членĕсем: подлежащи — *хур кайăксем,* сказуемăй — *çитнĕ*). Пăхăнуллă предложени тĕп предложенипе ***чух*** хыç сăмахпа çыхăннă, ***хăçан тухрĕ?*** ыйтăва хуравлать, вăхăта пĕлтерет, обстоятельство ушкăнне кĕрет, тĕп предложени умĕн тăрать, ăна пĕтĕмĕшлĕн ăнлантарать. Предложенире чарăну палли лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсем çук.

Предложени схеми:  .

**3.** *Вĕсем*[1] *Яриле мучи утса такăрлатнă*[2] *ансăр сукмакпа пĕчĕк уçланка тухрĕç*[1]. (Хв. Уяр.)

Ку пăхăнуллă хутлă предложени, икĕ хутсăр предложенирен тăрать. Тĕп предложени — *вĕсем ансăр сукмакпа пĕчĕк уçланка тухрĕç* (тĕп членĕсем: подлежащи — *вĕсем,* сказуемăй — *тухрĕç*), пăхăнулли — *Яриле мучи утса такăрлатнă* (тĕп членĕсем: подлежащи — *Яриле мучи,* сказуемăй —*такăрлатнă*). Пăхăнуллă предложени тĕп предложенипе вырăнĕ-йĕрки урлă çыхăннă, ***мĕнле?*** ыйтура тăрать (*мĕнле сукмакпа?*), определени пĕлтерĕшлĕ пулать, тĕп пайĕ варринче вырнаçнă, тĕп пайĕнчи *сукмакпа* сăмаха ăнлантарать.

Предложени схеми:  .

## 3. Союзсăр хутлă предложени

### Союзсăр хутлă предложение тишкерӳ тумалли йĕрке

1) Предложени миçе хутсăр предложенирен тăрать? Вĕсен тĕп членĕсене калăр.

2) Пĕлтерĕш енчен хутсăр предложенисем мĕнле çыхăннă (пĕр вăхăтра е умлă-хыçлăн пулакан ĕçсене

сăнлани, пĕр предложени теприн шухăшне уçса пани, пĕр предложени шухăшĕпе теприне хирĕçлени т. ыт. те)?

3) Чарăну палли лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсем.

## ТИШКЕРӲ ТĔСЛĔХĔСЕМ

**1.** *Вăрман тӳпине тĕтре хупласа тăрать*[1], *ун витĕр хĕвелĕн пайăркисем аран-аран кăна сăрхăнса тухаççĕ*[2]. (Д.Гордеев.)

Ку союзсăр хутлă предложени, икĕ хутсăр предложенирен тăрать. Пĕри — *вăрман тӳпине тĕтре хупласа тăрать* (тĕп членĕсем: подлежащи — *тĕтре,* сказуемăй — *хупласа тăрать*). Тепри — *ун витĕр хĕвелĕн пайăркисем аран-аран кăна сăрхăнса тухаççĕ* (тĕп членĕсем: подлежащи— *пайăркисем,* сказуемăй— *тухаççĕ*). Предложенисем пĕр вăхăтри пулăмсене сăнласа параççĕ, çавăнпа вĕсене запятой лартса уйăрнă.

Предложени схеми: [1] , [2] .

**2.** *Вăрмансемпе садсем çуллахи пек нумай сас-чĕвлĕ мар ĕнтĕ*[1]: *кайăксем кăнтăралла вĕçме тытăнаççĕ*[2]. (Н.Матвеев.)

Ку союзсăр хутлă предложени, икĕ хутсăр предложенирен тăрать. Пĕри — *вăрмансемпе садсем çуллахи пек нумай сас-чĕвлĕ мар ĕнтĕ* (тĕп членĕсем: подлежащи — *вăрмансемпе садсем,* сказуемăй — *сас-чĕвлĕ мар*). Тепри — *кайăксем кăнтăралла вĕçме тытăнаççĕ* (подлежащи — *кайăксем,* сказуемăй — *вĕçме тытăнаççĕ*). Иккĕмĕш предложени пĕррелĕшĕн шухăшне уçса парать, çавăнпа вĕсем хушшине икĕ точка лартнă.

Предложени схеми: [1] : [2] .

## Хутлă предложенири хутсăр предложенисем тĕрлĕ мелпе çыхăнни

ТИШКЕРӲ ТĔСЛĔХĔСЕМ

**1.** *Пӳлĕмре çутă та çутса ячĕç*[1]*,чӳрече карри витĕр пĕр-икĕ хутчен кил хуçин лăпсăркка пуçĕ курăнчĕ*[2(I)]*, анчах унта урăх çын пурри*[3] *палăрмарĕ*[4(II)]. (Л. Агаков.)

Ку сыпăнуллă хутлă предложени, икĕ пайран тăрать: I пайĕ — 1, 2 предложенисен пĕрлĕхĕ, II пайĕ — 3, 4 предложенисен пĕрлĕхĕ. Пайĕсем хирĕçлекен ***анчах*** союзпа çыхăннă.

I пайĕ — союзсăр хутлă предложени, вăл икĕ хутсăр предложенирен тăрать: пĕри — *пӳлĕмре çутă та çутса ячĕç* (подлежащи çук, сказуемăй — *çутса ячĕç),* тепри — *чӳрече карри витĕр пĕр-икĕ хутчен кил хуçин лăпсăркка пуçĕ курăнчĕ* (подлежащи — *пуçĕ,* сказуемăй — *курăнчĕ*). Предложенисенче пĕр-пĕрин хыççăн пулакан ĕçсене сăнланă.

II пайĕ — пăхăнуллă хутлă предложени. Тĕп предложени — 4-мĕшĕ (подлежащи çук, мĕншĕн тесен пăхăнуллă предложени подлежащи ушкăнне кĕрет, сказуемăй — *палăрмарĕ).* Пăхăнуллă предложени — 3-мĕшĕ (подлежащи — *çын*, сказуемăй — *пурри*). Пăхăнуллă предложени тĕп предложенипе ***-и*** аффикспа çыхăнать, ***мĕн палăрмарĕ?*** ыйтăва хуравлать, ĕç субъектне палăртать, подлежащи ушкăнне кĕрет, тĕп предложени умĕн тăрать.

Пĕр евĕрлĕ ĕçсене сăнланă пирки предложени пайĕсем хушшине, *анчах* союз умĕн запятой лартмалла.

Предложени схеми:




**2.** *Пăрахут тăвалла хускалсан*[1] *купца нумайччен алă сулса тăчĕ, унтан карлăк çине кăкăрĕпе ӳпĕнчĕ те*[2] *каç*

*сĕмлĕхĕнче хура тĕслĕн курăнакан Атăл шывĕ анаталла юхнине*[3] *сăнама тытăнчĕ*[2]. (Г.Краснов.)

Ку кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени, вăл виҫĕ хутсăр предложенирен тăрать. Тĕп членсем: *пăрахут хускалсан; купца тăчĕ, ӳпĕнчĕ, сăнама тытăнчĕ; Атăл шывĕ юхнине.*

Предложенин тĕп пайĕ иккĕмĕшпе виççĕмĕш предложенисен пĕрлĕхĕ пулать. Вăл хăй пăхăнуллă хутлă предложени. Тĕп предложени — *купца нумайччен алă сулса тăчĕ, унтан карлăк ҫине кăкăрĕпе ӳпĕнчĕ те сăнама тытăнчĕ* (подлежащи — *купца*, сказуемăйсем — *тăчĕ, ӳпĕнчĕ, сăнама тытăнчĕ*). Пăхăнуллă предложени — *каҫ сĕмлĕхĕнче хура тĕслĕн курăнакан Атăл шывĕ анаталла юхнине* (подлежащи — *шывĕ*, сказуемăй — *юхнине*). Пăхăнуллă предложени тĕп предложенипе пару падежĕн ***-е*** аффиксĕпе ҫыхăнать, ***мĕне сăнама тытăнчĕ?*** ыйтăва хуравлать, объекта пĕлтерет, дополнени ушкăнне кĕрет.

Пĕрремĕш пăхăнуллă предложени — *пăрахут тăвалла хускалсан* (подлежащи — *пăрахут*, сказуемăй — *хускалсан*). Вăл тĕп пайĕпе (2,3) деепричастин ***-сан*** аффиксĕпе ҫыхăнать, ***хăҫан?*** ыйтăва хуравлать, вăхăта пĕлтерет, обстоятельство ушкăнне кĕрет. Предложенире пĕр йышши сказуемăйсем (*тăчĕ, ӳпĕнчĕ, сăнама тытăнчĕ*) пур, союзсăр ҫыхăннисене запятой лартса уйăрнă.



**3.** *Ҫут ҫанталăк пытарса усранине*[1] *тупма ҫăмăлрах:*[2(I)] *кашни япала*[3] *ĕмĕрсем иртнĕ май*[4] *ҫиеле тухать*[3], *пĕр ҫын тупайманнине*[5] *тепри тупать*[6(II)]. (В.Эктел.)

Ку союзсăр хутлă предложени, икĕ пайран тăрать: I пайĕ — 1, 2 предложенисен пĕрлĕхĕ, II пайĕ — 3, 4, 5, 6 предложенисен пĕрлĕхĕ. Пайĕсем пĕр-пĕринпе интонаципе ҫыхăннă. Иккĕмĕш пайĕ пĕрремĕш пайĕн шухăшне уҫса парать, ҫавăнпа икĕ точка лартнă.

I пайӗ — пăхăнуллă хутлă предложени. Тӗп предложени — *тупма çăмăлрах* (подлежащи çук, сказуемăй — *çăмăлрах*), пăхăнуллă предложени — *çут çанталăк пытарса усранине* (подлежащи — *çут çанталăк,* сказуемăй — *усранине*). Пăхăнуллă предложени тӗп предложенипе пару падежӗн **-е** аффиксӗпе çыхăнать, ***мӗне тупма çăмăлрах?*** ыйтăва хуравлать, объекта палăртать, дополнени ушкăнне кӗрет.

II пайӗ — союзсăр хутлă предложени. Вăл икӗ пайран тăрать. Пӗрремӗш пайӗ — 3, 4 предложенисен пӗрлӗхӗ, пăхăнуллă хутлă предложени пулать. Тӗп предложени — 3-мӗшӗ (подлежащи — *япала*, сказуемăй — *çиеле тухать*), пăхăнуллă предложени — 4-мӗшӗ (подлежащи — *ӗмӗрсем*, сказуемăй — *иртнӗ*). Пăхăнуллă предложени тӗп предложенипе ***май*** хыç сăмахпа çыхăнать, ***хăçан çиеле тухать?*** ыйтăва хуравлать, вăхăта пӗлтерет, обстоятельство ушкăнне кӗрет.

Иккӗмӗш пайӗ — 5, 6 предложенисен пӗрлӗхӗ. Вăл пăхăнуллă хутлă предложени. Тӗп предложени — 6-мӗшӗ (подлежащи — *тепри*, сказуемăй — *тупать*), пăхăнуллă предложени — 5-мӗшӗ (подлежащи — *çын*, сказуемăй — *тупайманнине*). Пăхăнуллă предложени тӗп предложенипе пару падежӗн **-е** аффиксӗпе çыхăнать, ***мӗне тупать?*** ыйтăва хуравлать, объекта пӗлтерет, дополнени ушкăнне кӗрет.

Союзсăр хутлă предложени пайӗсем пӗр евӗрлӗрех пулăмсене сăнлаççӗ, çавăнпа запятой лартнă.

Предложени схеми:



## ТИШКЕРӲ ТУМАЛЛИ ТЕКСТСЕМ

1. Кам юратмасть-ши ҫуллахи ырӑ кунсенче пулла ҫӳреме? Пӑхӑр-ха, Сӗве кукринче миҫе пулӑҫ ларать! Кашнийӗнех вӑлта яма ятарласа тунӑ ҫурутрав пур. Миҫе ҫурутрав кунта? Шутласа та кӑлараяс ҫук. Вӗсене мӗнле тунине пӗлетӗр-и? Ҫыран хӗррине, кӑштах шыва кӗрсе, шалчасем ҫапнӑ та ҫур кӑшӑл пек туса ҫатан авнӑ, унтан тӑпра купаланӑ. (*А. Кӑлкан.*)

2. Ҫынсем юпа уйӑхӗнче ҫӑвакан юра питех шанмаҫҫӗ. Чӑнах та, вӑл ҫӗрле е ирхине шӳсе ҫемҫелнӗ ҫӗр питне тӑрӑшсах шурӑ пӗркенчӗкпе витет, анчах каҫчен унӑн тӗсӗ те юлмасть. Чӳк уйӑхӗнчи юр вара ун пек мар, вӑл часах ирӗлсе пӗтмест, хӑш чух икӗ-виҫӗ кун хушши, тепӗр чух эрни-эрнипех ура айӗнче кӑчӑртатса выртать. (*М. Кипек.*)

3. Хутран-ситрен ҫапла та пулкалать. Чӳк уйӑхӗн пуҫламӑшӗнчех ҫанталӑк сивӗтет. Ҫил ҫурҫӗр енне ҫаврӑнать те, кутсӑр-пуҫсӑр ҫил-тӑман ахӑрма тытӑнать. Пӗр кун иртет, тепӗр кун иртет. Юр ҫаплах ҫӑвать те ҫӑвать. Юлашкинчен вӑхӑтлӑха чарӑннӑ пек пулать. Хӗвел те хӑмӑр пӗлӗт айӗнчен тухса пӑхать. Анчах ҫурҫӗр ҫилӗ тӗнчене шӑнтмаллипех шӑнтса ярать те, чӗркуҫҫи таран юр ҫуркуннечченех выртса юлать. (*М. Кипек.*)

4. Ҫуркунне, ҫут ҫанталӑк чӗрӗлсен, чи малтан йӑмрана сӗткен кӗрет. Касса илетӗн те пӗр-пӗр якарах турата шаккаса шанкине ӳкеретӗн, пулас шӑпӑр (шӑхлич) валли хуппинчен чӗлӗх тӑватӑн. Анкарти хыҫӗнчех — вӗтлӗх вӑрманлӑх. Тарӑн ҫырма. Унта шӗшкӗ хуппине касса сӗветӗн. Ҫак хуппа чӗлӗх ҫине чӗркесе каятӑн. Акӑ сана ӗне мӑйраки пысӑкӑш шӑхлич хатӗр те. (*А. Емельянов.*)

5. — Итле-ха, шӑпӑрлан. Арҫут ҫырмине пӗлетӗн-и? Унта тӑм шӑтӑкӗсем пур. Ҫиелти шӑтӑкра — шур тӑм. Ҫавӑнта кайса ху пуҫу пысӑкӑш илсе кил. (*А. Емельянов.*)

6. Пирĕн пӳрт вырăнĕнче урамалла тăватă чӳречеллĕ чул çурт ларать. Пӳрт çумĕнчех сăрланă вырăсла хапха, унтан лаç... Лаç умĕнче пахча. Чиесем те ватăлса кайса йăмрапа танах çĕкленнĕ. Картине улăштарнă, лаç тăррисене шиферпа витнĕ. Пахча умĕнче сак. (*А. Емельянов.*)

7. Акă тĕмĕсем. Мĕн тери хăрушшăн курăнаççĕ вĕсем тĕттĕм каç! Автомата çирĕпрех тытатăп. Акă кабель татăкĕ... Асăрханулăн йĕри-тавралла пăхса илтĕм: такам пур пекех туйăнать. Пăч тĕттĕм, çывăхра пĕр саслĕвĕ те илтĕнмест. (*А. Артемьев.*)

8. Клуб еннелле хавасланса утатăп. Ман чĕрере пысăк савăнăç. Эпĕ хам çамрăкшăн та, ырă, сывă пулнăшăн та, яла ĕçлеме таврăннăшăн та, савнине тĕл пулнăшăн та пĕтĕм чунтан савăнатăп! Нумайрах пурăнас, ĕçлес, юратас килет манăн. (*А. Артемьев.*)

9. Ашшĕ вăрăм сăмсаллă шур карттусĕпе. Хĕвеле хирĕç пăхма меллĕ тет унпа. Вăрçăран таврăннă хулăн тĕплĕ аттине те пăрахмасть-ха. Шăлаварĕ те çĕнĕччĕха ашшĕн иртнĕ çулсенче. (*И. Егоров.*)

10. Эпир ик енĕпе те йывăçсем ашкăрса ларакан ансăр урампа турбазăналла пыратпăр. Ватăрах йывăçсене тĕллĕн-тĕллĕн касса янă. Çаплипех выртаççĕ-ха, тирпейлеме ĕлкĕреймен-мĕн. Вĕсем урлă каçкаласа хӳме çумнерехри тем сарлакăш тунката патне пырса тухрăмăр. (*И. Егоров.*)

11. Тунти кун. Чурачăкра пасар. Редактор райĕçтăвком ларăвне тухса кайрĕ. Пĕччен тунсăх. Манăн чĕре вырăнта мар ĕнтĕ. Шухăшпа пĕрре яла, тепре Шупашкара çитетĕп... Унтан каллех редакцие. (*Г. Ефимов.*)

12. Эх, пыраттăмăр вара çапса çăвакан çумăра хирĕç. Утма йывăр, сивĕ. Шинель аркине çил силлет, туллать. Хырсем, чăрăшсем вĕçĕмсĕр кашлаççĕ, авăнаççĕ, силленеççĕ, пĕр-пĕрин çумне тайăнаççĕ. Пĕр-пĕринпе пăшăлтатнă пек. (*В. Алентей.*)

13. Пурнăç! Мĕн тери савăнăçлă та тунсăхлă вăл. Пурнăçра шухăшламалли, ăнланмалли мĕн тери нумай. Аслă тĕнчери ĕмĕр сӳнми пурнăçпа танлаштарас пулсан çын ĕмĕрĕ шăрпăк чĕртсе сӳнтернĕпе пĕрех. Кăшт çуталчĕ те сӳнчĕ вăл. Анчах çав кĕске ĕмĕрте мĕн-мĕн кăна курмасть-ши, тӳсмест-ши этем? (*В. Алентей.*)

14. Декабрĕн юлашки кунĕсем. Çил çукпа пĕрех. Сивĕ. Урама тухсанах вăл пите çулăм пек пĕçертсе илет. Йăмрасем шап-шурă паспа хупăрланнă. Тураттсем çине хитре чĕнтĕр çакса хунă пекех туйăнать. (*В. Алентей.*)

15. Вара куç умне каллех Чăваш çĕршывĕ тухатчĕ. Аякраччĕ вăл сенкер кӳлĕсен çĕршывĕнчен. Çамрăк каччăн унта халь тесен халь вĕçсе каяс килетчĕ. Çăлтăрсен çумĕпе, уйăх çумĕпе вĕçес килетчĕ унăн. Кăвак сĕмлĕх витĕр, тĕтрелĕх витĕр. (*В. Алентей.*)

16. Эсĕ кăпăшка çĕрте тем чухлĕ кăтра кăмпа ларнине курах каятăн. Пурте сарă хăмăр. Тĕксĕмленме, хуралма ĕлкĕреймен. Эппин, нумай пулмасть тухнă. Пысăкăшĕ те чăх çăмарти чухлĕ кăна. Татма васкамастăн-ха. Ăçта çухалччăр? Эсĕ пăхса йăпанасшăн. Татсассăн та ăна карçинкка тӳрех хурас килмест. Ара, вăл пĕрремĕш кăмпа-çке. Вăрманăн чи малтанхи парнийĕ! (*Г. Орлов.*)

17. Тимофей Иванович хăй тăрăх пăхса илет. Паян вăл çар тумĕпе. Арăмĕн арчинче çирĕм çул хушши выртнă салтак гимнастеркине, галифепе хром аттине тăхăннă. Кăкăрăн сылтăм енче гварди значокĕ, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ. Медалĕсене шăл порошокĕпе тап-таса çутатнă. (*А. Емельянов.*)

18. Эсĕ пăх-ха... Эпĕ те сан пекех çамрăк çын пулса ӳснĕ. Манăн хальхи пек çамрăклăх пулнă-ши? Пулман. Акă эсĕ çирĕмре. Сан умра мĕн тĕрлĕ сарлака та аслă çул. Эпĕ çирĕмре чухне вара манăн мĕн пулнă? (*С. Лашман.*)

19. Халь килне кай. Эсĕ хăвăн пархатарлă ĕçне вĕçленĕ. Чуну хушнипе. Чун хушнă ĕç вара нихăçан та

пăсăк пулмасть. Ха, эсĕ, Шăнкăрч, пĕртте пĕчĕк мар иккен! Атя, кай. Чипер çит, Шăнкăрч! (*В. Енĕш.*)

20. Лайăх сапсан, ачам, кашни пĕрчĕ çĕре тăрăнса ларать. Сăвăс евĕр. Вара сўрелемелли çеç юлать. Тепре ывăçласа ил-ха...

Начар! Тырра ывăçланă-ывăçламан чышку сан чул пек хытă пултăр. (*В. Енĕш.*)

21. Кăнтăр вăхăчĕ. Хире тухнă йыш валли колхоз пăтă пĕçерттернĕ. Пăри пăтти. Çынсем çырма пуçне вырнаçнă. Васкамасăр, шăкăл-шăкăл калаçса апатланаççĕ. Пăшăхнă Шăнкăрчăн апатне те çиес, шывне те ĕçес килет. (*В. Енĕш.*)

22. Çулсем çын пурăнни-пурăнманнине кĕтсе тăмасăр сăхă кашкăр çăварне лекесрен хăраса таракан куянран та хăвăртрах мĕлтлетсе иртеççĕ иккен. Пуçланать пек кăна çулталăк — унăн хўрине, чакакăнниччен виçĕ хут кĕскерехскерне, путлĕн курса та юлаймастăн. (*Д.-Чалтун.*)

23. Каялла килнĕ çĕре пўртре çутă çукчĕ. Асăрханса чўрече умĕнчен иртрĕм. Лида пўлĕмĕнче чĕнтĕрлĕ карри витĕр шурă мĕлке курăнса кайнă пек туйăнчĕ — тепĕр хут пăхма хăяймарăм. Мана туйăнчĕ кăна пулмалла. (*В. Игнатьев.*)

24. Ытарма çук кун. Савса, кулса пăхать хĕвел. Ăшă. Тўлек. Çап-çутă та тап-таса урам. Çулласа тасатнă пек. Пўрт çумĕнчи саксем, пĕренесем çинче ватă-вĕтĕ ларать. Ача-пăча чупать, айкашать. (*И. Моисеева.*)

25. Анатра пăшалпа печĕç. Ун сассине илтсен Палаки аппа йĕрсе ячĕ. Пĕр сассăр. Ĕсĕклемесĕр. Хул-çурăмĕ вĕттĕн-вĕттĕн чĕтрерĕ ун. (*В. Енĕш.*)

26. Тухтар йĕри-тавра çаврăнса пăхрĕ. Никам та çук. Тухтар пир татăкĕпе çыхнă чĕркене салтрĕ. Шурă япала. Кĕпе-çке! Шап-шурă йĕтĕн çиппинчен тĕртсе çĕленĕ шурă кĕпе. Çухипе çанни вĕçне, аркине парăс çиппипе тĕрленĕ. Тĕрри калама çук чечен. (*Илпек М.*)

## ТИШКЕРӲ ТУМАЛЛИ ПРЕДЛОЖЕНИСЕМ

1. Пианист таврара мĕн пуррине асăрхамарĕ; унăн чун хавалĕ çĕкленнипе куç шăрçисем пысăкланса, хуралса кайрĕç, вăрăм çырă çӳçĕ куç харшисем çинелле сапаланса пычĕ, хавхаланнă этемĕн ăста аллисене парăннă фортепьяно пĕрре аслати пек кĕрлерĕ, тепре кĕсле пек çепĕç янăрарĕ. (*А. Артемьев.*)

2. Эпĕ, шухăшсăр-мĕнсĕр ял шăплăхĕпе киленсе пыраканскер, хĕрарăм çине малтанласа пит тимлесех те пăхман-тăр, анчах та иксĕмĕр çывăхланса пынă май темĕнле вăрттăн туйăм хĕрарăма тинкererex пăхма хистерĕ. (*Г. Ефимов.*)

3. Чарăнса тăнă чух капот çине пĕр шăна ларчĕ те машина хăвăрт пынă май ниепле те вĕçсе юлаймарĕ, капот çумнех лапчăнса пычĕ, шофер тарăн ланкашка тĕлĕнче тормозласан тин вăл капотран хăпăнма пултарчĕ. (*Ю. Скворцов.*)

4. Ашшĕ, ĕшенсе çитнĕскер, часах çывăрса кайрĕ, вăл вăрăммăн сывланине Куçма лайăхах илтрĕ. (*Н. Петровская.*)

5. Концерт пĕтсен Маюк клуб патĕнче чылайччен тăчĕ, вара Модест Палановăпа клубран хула-хул тытса тухнине курсан шăппăн, никама систермесĕрех килелле утрĕ. (*Г. Ефимов.*)

6. Каччă çăвăнса тасалчĕ, Селиме панă тĕрĕллĕ кĕпине, çĕнĕ шăлаварĕпе пиншакне тăхăнчĕ, çиелтен тата тепĕр пиншак уртса ячĕ, каç тĕттĕмĕ çывхарсан урама тухрĕ. (*Илпек М.*)

7. Микихвер бригада çыннисем ытлашширех хĕрӳленнине туять, арçынсене аллипе суллать вăл, анчах лешсем куçĕсемпе Шакмакова тăрăннă та нимĕн те асăрхамаççĕ. (*Г. Краснов.*)

8. Актаев тӳсме çук ыратнипе тăна кĕчĕ те çав самантрах хăйĕн пĕтĕм шăм-шакĕ хытса ларнине, ăна ту пек йывăр япала пусса выртнине туйрĕ. (*А. Артемьев.*)

9. Поезд тапранса кайнă хыççăн çынсем майĕпе шăпланма пуçларĕç, мĕншĕн тесен халь тин ним тума та май килмен. (*Л. Агаков.*)

10. Ут яракансем кĕпĕрленсе тăнă тĕле вăл чылай кайран, ыттисем мала тухнисене парнесем валеçнĕ чух тин, пырса çитрĕ. (*К. Турхан.*)

11. Павăл Чĕкеç колхоз правленийĕн членĕ пулнине аса илчĕ те, ăна Кольцовпа Ильдеменов унта та, колхоз правленийĕнче, Чĕкеç кирек мĕн калана-каламан пуçĕсене сĕлтсе килĕшнĕн туйăнса кайрĕ. (*Л. Таллеров.*)

12. Малтанласа вăл ирĕксĕр çеç, ту ўкерчĕкĕсем питĕ кăсăклантарнă пек, енчен енне пăхкаларĕ, кайран вара хĕр унпа пĕрле килме килĕшни хăех нумая пĕлтернине шухăшласа илсен кăмăлĕ уçăлса кайрĕ те — чăнласах тискертерех илем ăна тыткăна илчĕ. (*Ю. Скворцов.*)

13. Пăсланакан чаплашкасем умне ларсан, пĕчĕк кашăкпа вĕри кофе пăтратма тытăнсан Лена Варлам шанчăксăр, суя чунлă çын мар иккен тесе шухăшласа илчĕ. (*Д. Гордеев.*)

14. Вăл пире кайăксем ашшĕсĕр тăрса юлни, иккĕмĕш кун чĕпписем патне таврăнманни, вĕсем аптăраса çитни, çак самантра пулăшу пулмасан вĕсем вилме пултарни çинчен каласа ăнлантарчĕ. (*Г. Луч.*)

15. Амăшĕн вĕри куççулĕ хура-шур пĕркелесе пĕтернĕ пичĕ тăрăх, çурхи пĕчĕк çырмасем çул шыраса кукăр-макăр тĕмескесем хушшинче юхнă пек, саланчĕ. (*Н. Петровская.*)

16. Чăнкă çыран тĕлĕнче выртакан пысăк чулсем хушшинче пытанса кун каçнă хыççăн, тĕттĕм пулсан, вăл маяк хуралçи пурăнакан çурта пырса кĕнĕ. (*М. Кипек.*)

17. Хамăр чавса хатĕрленĕ окопсем тăшман самолечĕсене курăнмалла мар, кам ĕлкĕрет, çавăн маскировка ĕçне хушасса кĕтмесĕрех тытăнмалла. (*Илпек М.*)

18. Хӗвел пайӑркисем тӳррӗн ӳкнӗрен ҫак ҫӳҫене пӗр-пӗр пысӑк ӑста ылтӑн шывӗпе сирпӗтсе тухнӑ та, ҫав шыв кӑштах типсе ҫитеймен пек туйӑнать. (*Г. Ефимов.*)

19. Ывӑлӗсене те вӑл кайӑка ҫӳрес ӗҫе ачаранах вӗрентнӗччӗ, анчах аслӑ ывӑлӗпе вӑталӑххи Граждан вӑрҫинче шуррисемпе ҫапӑҫса вилчӗҫ, кӗҫӗнни вӑрманта ҫӳрессине питех юратмарӗ вара. (*М. Кипек.*)

20. Салампи Казаковпа курса калаҫас тесе ун хваттерне кӗчӗ, анчах телей пулмарӗ: Петя Пысӑк Нина патне кӳршӗ района кайнӑ иккен. (*А. Артемьев.*)

21. Ачасем чир пуснипе яслие кайман чухне вӗсене утьӑкка сиктерсе ларчӗ вӑл, хӑйсен сӗт-турӑхӗпе тӑрантарса усрарӗ. (*В. Петров.*)

22. Ҫамрӑк ҫын ҫӗлӗкне хыврӗ те вырӑн ҫинчи хӗр ача ҫине куҫ ывӑтрӗ, хальхинче вӑл пӗр ҫирӗм ик-ҫирӗм виҫ ҫулсенчи каччӑ пулни курӑнчӗ. (*Ю. Скворцов.*)

23. Пӳрт умне ҫитеспе купӑс сасси каллех шӑпланчӗ, урамра такам мӑкӑртатса калаҫни, кулни илтӗнчӗ, унтан чӳрече янахӗ ҫумӗнчех тем кӑштӑртатрӗ те, кантӑк карри урлӑ, тул енчен, этем пуҫӗ курӑнчӗ. (*А. Артемьев.*)

24. Экзамента вӑл сасартӑках пӑлхана пуҫларӗ, аудиторие ректор кӗрсе ларсан Салампи пушшех пӑлханма тытӑнчӗ; хӑй каламалли ыйтусене хут ҫине ҫырнӑ чух унӑн алли тарласа кайрӗ, чӗтре пуҫларӗ, сас паллисем кукӑр-макӑр пулса пӗтрӗҫ. (*А. Артемьев.*)

25. Салампие ку питӗ тарӑхтарчӗ, анчах пуринчен ытла ӑна Саланов хӗрсе кайса тавлашни тӗлӗнтерчӗ: ҫак пахчаҫӑ, хӑйӗн ӗҫӗшӗн пӗтӗм чунне параканскер, нихҫан та литературӑна е искусствӑна ҫав териех юратман пуль тесе шутланӑччӗ хӗр. (*А. Артемьев.*)

26. Чӑваш хӗрарӑмӗ кӑштах канма май килсен те пуҫне ҫытар ҫине хума кӑна ӗлкӗрет — шурӑмпуҫ килнине сиссе вырӑн ҫинчен сиксе тӑрать, каллех ӗмӗр тӑршшӗпе алӑран кайми ӗҫе тытӑнать. (*Н. Мранька.*)

# ПĔЛĔВЕ ТĔРĔСЛЕМЕЛЛИ ТЕСТСЕМ

## I. Сăмах майлашăвĕн хăш схеми тĕрĕс?

1 2 3 4 5

**1.** *Тĕтререн уçăлса çитмен çӳллĕ тусем*

1) 


3) 


2) 


4) 


1 2 3 4 5

**2.** *Инçетри хулара вĕренекен кĕçĕн хĕрĕ*

1) 


3) 


2) 


4) 


1 2 3 4 5

**3.** *Çырма хĕрринчи чул çурт стени*

1) 


2) 

3) 1 2 3 4 5



4) 1 2 3 4 5



**4.** *Шурă тăмпа шуратнă пӳрт умĕ*

1) 1 2 3 4 5



3) 1 2 3 4 5



2) 1 2 3 4 5



4) 1 2 3 4 5



**5.** *Хырлăхри кăвак мăклă ансăр уҫланкă*

1) 1 2 3 4 5



3) 1 2 3 4 5



2) 1 2 3 4 5



4) 1 2 3 4 5



**6.** *Ҫак паркри шĕвĕр папкаллă курăксем*

1) 1 2 3 4 5



3) 1 2 3 4 5



2) 1 2 3 4 5



4) 1 2 3 4 5



1 2 3 4 5

**7.** *Тĕттĕм тӳпери уйăхăн шупка çути*



1 2 3 4 5

**8.** *Ту хушшине хĕсĕннĕ шыв аваăрĕсем*



1 2 3 4 5 6

**9.** *Çырма тĕпĕнче шăнкăртатса юхакан çăл куçĕ*



1 2 3 4 5 6

**10.** *Ялти шкулта ĕçлекен кĕçĕн хĕрĕн ачисем*






1 2 3 4 5 6

**11.** *Патвар юмансем хушшинче ӳсекен ватă вĕрене*




1 2 3 4 5

**12.** *Йăрăс пӳллĕ çамрăк шурă хурăнсем*




1 2 3 4 5

**13.** *Шереписене тураса ларакан шурă хурăнсем*



1 2 3 4 5

**14.** *Хырлăхри кăвак мăклă ансăр уçланкă*



1 2 3 4 5

**15.** *Шултра чечеклĕ шурă пурçăн кĕпе*



1 2 3 4 5

**16.** *Леш урамри темиçе хутлă çуртсем*



## II. Хутсăр предложенин хăш схеми тĕрĕс?

1 2 3 4 5 6 7

**1.** *Сайра хутра чăнкă çырантан хăйăр юхса анать.*

1) 


2) 


3) 


4) 


1 2 3 4 5 6 7

**2.** *Пуç урлă кураксен шавлă ушкăнĕ вĕçсе иртрĕ.*

1) 


2) 


3) 

4) 


1 2 3 4 5 6 7

**3.** *Хӗвелпе вӗриленсе кайнӑ сывлӑша варкӑш ҫил уҫӑлтарать.*

1) 


2) 


3) 


4) 


1 2 3 4 5 6 7

**4.** *Сӗлӗ пӗрчи пек йӑпӑлтӑк пулӑсем шывран сиксе*

8

*тухаҫҫӗ.*

1) 


2) 

3)




4)




**5.** *Кураксен пысăк ушкăнĕ хăмăл çийĕн явăнать.*

1)




3)




2)




4)




**6.** *Темиçе тĕлте кăвак çăра тĕтĕм явăнса мăкăрланать.*

1)




2)




3)



4) 

**7.** *Кăнтăрлахи*[1] *янăравлă*[2] *сасăсем*[3] *каçхи*[4] *лăпкă*[5] *сасă-семпе*[6] *улшăнаççĕ*[7].

1) 

2) 

3) 

4) 

**8.** *Шыв*[1] *юхăмĕ*[2] *шурă*[3] *чуллă*[4] *вырăна*[5] *шăнкăртатса*[6] *çитет*[7].

1) 

2) 

3) 


4) 


1 2 3 4 5 6 7

**9.** *Урайĕнче икĕ кушак çури ыталанса выртса выляççĕ.*

1) 


2) 


3) 


4) 


1 2 3 4 5

**10.** *Çуралнă чечексен таврашĕнче тĕкĕлтура сăрлатса*

6

*çӳрет.*

1) 


2) 




1 2 3 4 5 6

**11.** *Хăш-пĕр кăмпаçă çак вăхăтра кăмпа татать.*




## III. Хутлă предложенири хутсăр предложенисене мĕн çыхăнтарать?

**1.** *Тĕкĕр çинче шăвакан тулти тĕнче çине пăхса ларнă май пуйăс хӳри текех сулнăка кайса пынă пек туйăнать ăна.*

1) Союз
2) Хыç сăмах
3) Интонаци
4) Вырăнĕ-йĕрки

**2.** *Уйăхăн шупка çути çулçăсем хушшипе чĕнтĕрленсе çĕре сăрхăннине курсан тин кăшт лăпланнă пек пулчĕ вăл.*

1) Хыç сăмах
2) Аффикс
3) Вырăнĕ-йĕрки
4) Интонаци

**3.** *Пӳлĕме кĕрсен вăл тикĕс мар кантăкран сăрхăнакан уйăх çути стена çине ӳкернĕ ылтăн çип сĕвемĕ пек йĕрсем çине пăхса тенкел çине ларчĕ.*

1) Интонаци
2) Хыҫ сӑмах
3) Вырӑнӗ-йӗрки
4) Аффикс

**4.** *Ту хушшинче, хӗсӗннӗ шыв аваӑрӗсем ҫинче, вырӑнӑн-вырӑнӑн шур кӑпӑк арман чулӗ пек ҫаврӑнса тӑрать, тӗл-тӗл, хӗсӗк ҫӗрте, тӗрлӗ тӗслӗ чулсем пӗр-пӗринпе ҫапӑнса юрлаҫҫӗ.*

1) Вырӑнӗ-йӗрки
2) Хыҫ сӑмах
3) Интонаци
4) Аффикс

**5.** *Хулана ҫитсе кӗрес чух тин вӑл шӑнса кайнине туйрӗ те ҫийӗнче пиншак ҫуккине асӑрхарӗ.*

1) Союз
2) Аффикс
3) Хыҫ сӑмах
4) Вырӑнӗ-йӗрки

**6.** *Вара чун кӳтсе килнипе эпӗ Кольӑран вӑрттӑн вокзал хыҫӗнче карта ҫумне таянса макӑртӑм.*

1) Хыҫ сӑмах
2) Интонаци
3) Аффикс
4) Вырӑнӗ-йӗрки

**7.** *Сывлӑмпа йӗпеннӗ жасмин чечекӗсем паян ырӑ ҫанталӑк пуласса сиссе, пыл хурчӗсене чӑтӑмсӑррӑн кӗтсе, килес ырлӑха халех туйса тӑнӑ евӗр, телейлӗ ҫӳҫенӳпе чӗтренсе илеҫҫӗ.*

1) Хыҫ сӑмах
2) Аффикс
3) Вырӑнӗ-йӗрки
4) Интонаци

**8.** *Йытӑ нӑйкӑша-нӑйкӑша автобус тавра кускаларӗ, автобус хускалсан та чупса пӑхрӗ, анчах хирӗҫ килекен машинӑсенчен хӑраса айккинелле пӑрӑнчӗ.*

1) Союз
2) Интонаци
3) Аффикс
4) Хыҫ сӑмах

**9.** *Венир, ӑшӑ ҫӗрте юлхавланса, куҫ умне килсе ларнӑ шӑна темӗнле слон пек курӑнса кайнинчен тӗлӗнсе пӗр хушӑ тапранмасӑрах выртрӗ.*

1) Хыҫ сӑмах
2) Интонаци
3) Союз
4) Аффикс

**10.** *Хутран-ситрен кӑна вӑрман леш енче кӗпшӗл кӑшкӑрашни илтӗнкелет.*

1) Хыҫ сӑмах
2) Интонаци
3) Аффикс
4) Вырӑнӗ-йӗрки

**11.** *Иркка пӗлтӗр Лисук ҫӗлесе панӑ хӑмач кӗпине тӑхӑнчӗ те уявра тантӑш-тусӗсемпе ҫӳрерӗ, праҫник тутине сисмерӗ.*

1) Хыҫ сӑмах
2) Интонаци
3) Аффикс
4) Вырӑнӗ-йӗрки

**12.** *Вӗсем пурте юлашки тӗлпулусем мӗнле вӗҫленессе кӗтсе кунтах уткаласа ҫӳреҫҫӗ-ха.*

1) Хыҫ сӑмах
2) Интонаци
3) Аффикс
4) Вырӑнӗ-йӗрки

**13.** *Эпĕ армак-чармак юмансем хушшинчи ватă вĕрене çинче хĕрлĕ хырăмлă уйăпсем апатланнине сăнама тытăнтăм.*

1) Хыç сăмах
2) Интонаци
3) Аффикс
4) Вырăнĕ-йĕрки

**14.** *Илюк пасар хыçне кайрĕ те Свердлов урамĕ вĕçĕнче çула май каякан пĕр-пĕр машина килессе кĕтме тытăнчĕ.*

1) Хыç сăмах
2) Интонаци
3) Аффикс
4) Вырăнĕ-йĕрки

## IV. Хутлă предложенин хăш схеми тĕрĕс?

**1.** *Парăхвиш тарăхса калаçса пынă май вĕсем юмахри çамрăк улăп юриех ашкăнса йĕркесĕр купаланă пек акăш-макăш чулсем хушшине кĕрсе кайрĕç.*



**2.** *Шкулта вĕренӳ пуçланиччен Ольга Петровна кашни киле кĕрсе кăçал шкула миçе ача пухăнассине пĕлчĕ.*



**3.** *Вăхăт çитсен, карта хыçне тухса тăрăнтарса лартнă улмуççи чечек çурнă евĕр, пурин куçне те курăнмалла хĕр пулса тăнă Укка.*

1) 


3) 


2) 


4) 


**4.** *Мала тухас шанчăк пĕтнĕ пулсан та вĕсем юлашки тĕлпулусем мĕнле вĕçленессе кĕтсе кунтах уткаласа çӳреççĕ-ха.*

1) 


3) 


2) 


4) 


**5**. *Касса янă йывăç хăйне нимĕнле сиен тумарĕ пулсан та Макаç çак йӳçлĕхрен Çтаппан пырса пулăшмасăр тухаймарĕ.*

1) 


3) 


2) 


4) 


**6.** *Вăранса кайсанах вăл çынсем кисренсе пыракан вагон шавне хуплас пек хыттăн калаçнине илтрĕ, сак вĕçĕнче ватă кондуктор тĕлĕрсе ларнине курчĕ.*

1) 


3) 


2) 


4) 


**7.** *Вагон коридорĕ тăрăх унталла-кунталла пăхса утса пынă май вĕсем Илюк ларакан купе пушах иккенне курчĕç те тӳрех унталла пăрăнса кĕчĕç.*



**8.** *Хăй кăмăллакан çыннăн ĕçĕсем ăнса пыни çамрăк Ульянова питĕ савăнтарчĕ.*



**9.** *Бианкăна хăйпе пĕрле илесшĕн марччĕ Анатолий Семенович, анчах йытă çури хăйĕнчен юласшăн маррине, вăл куçран тилмĕрсе пăхнине курчĕ те пăрахса хăвармарĕ.*



**10.** *Вара ман куç умне хир сыснисем хăйсен еккипе епле пыни, вĕсем хыççăн тигр мĕнле шăвăнса хăвалани питех те уçăмлăн тухса тăчĕ.*



**11.** *Герман вăлтисене тĕрĕслесе пăхрĕ те шыв çуса кайнă çăкăрĕсене улăштарса лартрĕ, кайран татах тĕрĕслесе пăхрĕ, ăманĕсем те, çăкăрĕсем те çуккине кура çĕнĕрен лартрĕ.*



**12.** *Вĕсем каялла кайма тухнăранпа самай вăхăт иртрĕ пулин те хуралсах пыракан вăрман вĕçĕ те курăнмасть.*



**13.** *Андрей Васильевич ку шкулта ĕçлеме тытăннăранпа темиçе кун, темиçе эрне иртсен пач çĕнелсе, пач расналанса кайрĕ Дина чун-чĕри.*



## V. Предложенири чарăну паллине мĕнле пунктуаци правилине пăхăнса лартнă?

**1.** *Вăрăм çўç пек усăнакан туратлă çирĕксем пуçĕсене уснă, Çирĕклĕх шывне хупласах хунă.*

1) Союзсăр çыхăннă пĕр йышши членсене запятойпа уйăрмалла.

2) Союзсăр хутлă предложени пайĕсем пĕр евĕрлĕ ĕçсене е пулăмсене сăнланă чух вĕсене запятойпа уйăрмалла.

3) Сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсене запятойпа уйăрмалла.

4) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăрмалла.

**2.** *Çапă купи айĕнче вăрман шăшийĕ чупкалать, ахăртнех, хăйĕн йăвине йĕкел пухать пулĕ.*

1) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăраççĕ.

2) Кӳртĕм сăмахсене сказуемăй умĕн тăнă чух предложенири ытти сăмахсенчен запятойпа уйăраççĕ.

3) Союзсăр çыхăннă пĕр йышши членсене е вĕсен ушкăнĕсене запятойпа уйăраççĕ.

4) Хутлă предложенин союзсăр çыхăнакан пайĕсем хушшине запятой лартаççĕ.

**3.** *Тӳпелешӳ пуçланса кайрĕ те, Лисук инкĕшĕсемпе пĕрле кил хушшине пырса ларчĕ.*

1) Пĕр йышши членсене запятой лартса уйăраççĕ.

2) Союзсăр хутлă предложени пайĕсене запятой лартса уйăраççĕ.

3) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятойпа уйăраççĕ.

4) Сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсем хушшине запятой лартаççĕ.

**4.** *Çуркунне, çĕмĕртсем çеçкене ларсан, тĕл пулнăччĕ вĕсем.*

1) Союзсăр çыхăннă пĕр йышши членсене пĕр-пĕринчен запятой лартса уйăраççĕ.

2) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăраççĕ.

3) Кӳртĕм сăмахсене сказуемăй умĕн тăнă чух предложенири ытти сăмахсенчен запятойпа уйăраççĕ.

4) Сăмах тĕп предложенин тытăмне кĕнине кăтартма ăна запятой лартса уйăраççĕ.

**5.** *Çулла, ачасем çум çумлама тухсан, пахча янăраса çеç тăрать.*

1) Союзсăр çыхăннă пĕр йышши членсене пĕр-пĕринчен запятой лартса уйăраççĕ.

2) Уйрӑмлатнӑ сӑмахсене предложенири ытти сӑмахсенчен запятой лартса уйӑраҫҫӗ.

3) Кӳртӗм сӑмахсене сказуемӑй умӗн тӑнӑ чух предложенири ытти сӑмахсенчен запятойпа уйӑраҫҫӗ.

4) Сӑмах тӗп предложенин тытӑмне кӗнине кӑтартма ӑна запятой лартса уйӑраҫҫӗ.

**6.** *Ачаш юмансене, ахӑртнех, ҫеҫен хирти ҫум курӑкӗсем чӑрмантараҫҫӗ пулӗ.*

1) Уйрӑмлатнӑ сӑмахсене предложенири ытти сӑмахсенчен запятой лартса уйӑраҫҫӗ.

2) Кӳртӗм сӑмахсене сказуемӑй умӗн тӑнӑ чух предложенири ытти сӑмахсенчен запятойпа уйӑраҫҫӗ.

3) Союзсӑр ҫыхӑннӑ пӗр йышши членсене е вӗсен ушкӑнӗсене запятойпа уйӑраҫҫӗ.

4) Хутлӑ предложенин союзсӑр ҫыхӑнакан пайӗсем хушшине запятой лартаҫҫӗ.

**7.** *Кил хушши шӑлакан хӗр вара, пӗр вырӑнта хытса тӑнӑскер, чӑматанне ывӑннӑ пек ҫапкалантарса кайнӑ ҫӗнӗ турист хыҫҫӑн питӗ сӑнаса пӑхса юлчӗ.*

1) Кӳртӗм сӑмахсене сказуемӑй умӗн тӑнӑ чух предложенири ытти сӑмахсенчен запятой лартса уйӑраҫҫӗ.

2) Уйрӑмлатнӑ сӑмахсене предложенири ытти сӑмахсенчен запятой лартса уйӑраҫҫӗ.

3) Союзсӑр ҫыхӑннӑ пӗр йышши членсене е вӗсен ушкӑнӗсене запятой лартса уйӑраҫҫӗ.

4) Союзсӑр хутлӑ предложени пайӗсене запятой лартса уйӑраҫҫӗ.

**8.** *Больницине вара хулари пекех капмар туса лартнӑ та, йӑли-йӗрки те унтинчен нимпе те уйрӑлса тӑмасть пулмалла.*

1) Союзсӑр хутлӑ предложени пайӗсене запятойпа уйӑрмалла.

2) Сыпӑнуллӑ хутлӑ предложени пайӗсене запятойпа уйӑрмалла.

3) Пĕр йышши членсем пĕр вăхăтри ĕçсене е пулăмсене сăнланă чух вĕсене запятойпа уйăрмалла.

4) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятойпа уйăрмалла.

**9.** *Урамра, халăх пухăнса тăнă вырăнта, сасартăк хыттăн шавлама пуçларĕç.*

1) Союзсăр çыхăннă пĕр йышши членсене пĕр-пĕринчен запятой лартса уйăраççĕ.

2) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăраççĕ.

3) Кӳртĕм сăмахсене сказуемăй умĕн тăнă чух предложенири ытти сăмахсенчен запятойпа уйăраççĕ.

4) Сăмах тĕп предложенин тытăмне кĕнине кăтартма ăна запятой лартса уйăраççĕ.

**10.** *Ĕнер çеç çил аслатиллĕ çумăр пĕлĕчĕсене пăтратнă, кайăк кĕтĕвĕсене хăваланă, чечекри садсен шăршине çурхи шывсем çине иле-иле сапнă.*

1) Хутлă предложенин союзсăр çыхăнакан пайĕсем хисеплев интонацийĕпе пĕрлешнĕ чухне вĕсем хушшине запятой лартмалла.

2) Союзсăр çыхăннă пĕр йышши членсене е вĕсен ушкăнĕсене запятойпа уйăрмалла.

3) Сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсене запятойпа уйăрмалла.

4) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăрмалла.

**11.** *Хăвăл йĕри-таврашĕнчи йывăç хуппи тăсăлса çĕкленнĕ пек пулчĕ, урăхла каласан, хăвăл тутине тăсрĕ.*

1) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăраççĕ.

2) Кӳртĕм сăмахсене сказуемăй умĕн тăнă чух предложенири ытти сăмахсенчен запятойпа уйăраççĕ.

3) Союзсăр çыхăннă пĕр йышши членсене е вĕсен ушкăнĕсене запятойпа уйăраççĕ.

4) Хутлă предложенин союзсăр çыхăнакан пайĕсем хушшине запятой лартаççĕ.

**12.** *Тепĕр енче пĕр кĕтӳ пĕлĕт, шултра сурăхсем пек, ту тăрринелле чупать те икĕ еннелле уйрăлса каять.*

1) Кӳртĕм сăмахсене сказуемăй умĕн тăнă чух предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăраççĕ.

2) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăраççĕ.

3) Союзсăр çыхăннă пĕр йышши членсене е вĕсен ушкăнĕсене запятой лартса уйăраççĕ.

4) Союзсăр хутлă предложени пайĕсене запятой лартса уйăраççĕ.

**13.** *Унта туратсемпе хулăсем пĕр-пĕринпе çыхланса ларнă та, чупса пырса тăрăнсан та шăтарса тухаймастăн.*

1) Союзсăр хутлă предложени пайĕсене запятойпа уйăрмалла.

2) Сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсене запятойпа уйăрмалла.

3) Пĕр йышши членсем пĕр вăхăтри ĕçсене е пулăмсене сăнланă чух вĕсене запятойпа уйăрмалла.

4) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятойпа уйăрмалла.

**14.** *Эльвира çинçешке пӳрнисемпе куçне шăлса илет, пичĕ çинче вĕлтĕртетекен çӳç пайăркине хăлхи хушшине хĕстерет.*

1) Хутлă предложенин союзсăр çыхăнакан пайĕсем хисеплев интонацийĕпе пĕрлешнĕ чухне вĕсем хушшине запятой лартмалла.

2) Союзсăр çыхăннă пĕр йышши членсене е вĕсен ушкăнĕсене запятойпа уйăрмалла.

3) Сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсене запятойпа уйăрмалла.

4) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăрмалла.

**15.** *Хирĕç пăхса ларакан каччăн куçĕ, чăн та, куллен тĕл пулакан йышши мар.*

1) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăраççĕ.

2) Кӳртĕм сăмахсене сказуемăй умĕн тăнă чух запятойпа уйăраççĕ.

3) Союзсăр çыхăннă пĕр йышши членсене е вĕсен ушкăнĕсене запятойпа уйăраççĕ.

4) Хутлă предложенин союзсăр çыхăнакан пайĕсем хушшине запятой лартаççĕ.

**16.** *Пĕлтĕр Зинови, Хусанти медицина институтĕнче вĕренекенскер, практикăра пĕр чăваш ялĕнчи больницăра пулнăччĕ.*

1) Кӳртĕм сăмахсене сказуемăй умĕн тăнă чух предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăраççĕ.

2) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăраççĕ.

3) Союзсăр çыхăннă пĕр йышши членсене е вĕсен ушкăнĕсене запятой лартса уйăраççĕ.

4) Союзсăр хутлă предложени пайĕсене запятой лартса уйăраççĕ.

**17.** *Таçтан тури касри йăмрасем айĕнчен юрă вĕçсе килчĕ те, анат касри улаха чун кĕчĕ.*

1) Пĕр йышши членсене запятой лартса уйăраççĕ.

2) Союзсăр хутлă предложени пайĕсене запятой лартса уйăраççĕ.

3) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятойпа уйăраççĕ.

4) Сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсем хушшине запятой лартаççĕ.

**18.** *Хăрăк турат çинчен сала кайăк чĕвĕлтетсе вĕçсе анчĕ те, пĕчĕк хăрăк турат хуçăлса кӳлле чăмрĕ.*

1) Пĕр йышши членсене запятой лартса уйăраççĕ.

2) Союзсăр хутлă предложени пайĕсене запятой лартса уйăраççĕ.

3) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятойпа уйăраççĕ.

4) Сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсем хушшине запятой лартаççĕ.

**19.** *Пĕр каçхине, амăшĕ кӳршĕ яла хăнана кайсан, вĕсем çӳллĕ хӳме çумĕнче пысăк кашкăра асăрханăччĕ.*

1) Союзсăр çыхăннă пĕр йышши членсене пĕр-пĕринчен запятой лартса уйăраççĕ.

2) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăраççĕ.

3) Кӳртĕм сăмахсене сказуемăй умĕн тăнă чух предложенири ытти сăмахсенчен запятойпа уйăраççĕ.

4) Сăмах тĕп предложенин тытăмне кĕнине кăтартма ăна запятой лартса уйăраççĕ.

**20.** *Юхăм çырана пырса çапăнать, унтан каялла чакса пĕр вăя пуçтарăнать, шурă кăпăк кăларса уçă та ирĕк çĕрелле çул тытать.*

1) Хутлă предложенин союзсăр çыхăнакан пайĕсем хисеплев интонацийĕпе пĕрлешнĕ чухне вĕсем хушшине запятой лартмалла.

2) Союзсăр çыхăннă пĕр йышши членсене е вĕсен ушкăнĕсене запятойпа уйăрмалла.

3) Сыпăнуллă хутлă предложени пайĕсене запятойпа уйăрмалла.

4) Уйрăмлатнă сăмахсене предложенири ытти сăмахсенчен запятой лартса уйăрмалла.

**21.** *Зинови пĕрехмай таçта васкарĕ, ларма-тăма пĕлмерĕ, сăлтавсăрах вĕчĕрхенчĕ, татах çĕнĕрен те çĕнĕ вырăнсене туртăнчĕ.*

1) Хутлă предложенин союзсăр çыхăнакан пайĕсем хисеплев интонацийĕпе пĕрлешнĕ чухне вĕсем хушшине запятой лартмалла.

2) Союзсӑр ҫыхӑннӑ пӗр йышши членсене е вӗсен ушкӑнӗсене запятойпа уйӑрмалла.

3) Сыпӑнуллӑ хутлӑ предложени пайӗсене запятойпа уйӑрмалла.

4) Уйрӑмлатнӑ сӑмахсене предложенири ытти сӑмахсенчен запятой лартса уйӑрмалла.

**22.** *Ҫапла ӗнтӗ, шартлама сивӗ е вӑйлӑ ҫил-тӑман чухне пакша кӑнтӑрла та йӑвинчен пачах тухасшӑн мар.*

1) Уйрӑмлатнӑ сӑмахсене предложенири ытти сӑмахсенчен запятой лартса уйӑрӑҫҫӗ.

2) Кӳртӗм сӑмахсене сказуемӑй умӗн тӑнӑ чух предложенири ытти сӑмахсенчен запятойпа уйӑрӑҫҫӗ.

3) Союзсӑр ҫыхӑннӑ пӗр йышши членсене е вӗсен ушкӑнӗсене запятойпа уйӑрӑҫҫӗ.

4) Хутлӑ предложенин союзсӑр ҫыхӑнакан пайӗсем хушшине запятой лартаҫҫӗ.

**23.** *Вӗсенчен инҫех мар, хурӑнсем айӗнче, темиҫе сарӑ ҫулҫӑ кӑна вӗлтӗртетсе ӳкрӗ.*

1) Кӳртӗм сӑмахсене сказуемӑй умӗн тӑнӑ чух предложенири ытти сӑмахсенчен запятой лартса уйӑрӑҫҫӗ.

2) Уйрӑмлатнӑ сӑмахсене предложенири ытти сӑмахсенчен запятой лартса уйӑрӑҫҫӗ.

3) Союзсӑр ҫыхӑннӑ пӗр йышши членсене е вӗсен ушкӑнӗсене запятой лартса уйӑрӑҫҫӗ.

4) Союзсӑр хутлӑ предложени пайӗсене запятой лартса уйӑрӑҫҫӗ.

**24.** *Ҫу уйӑхӗн пуҫламӑшӗнче аслати хавассӑн кӗрлеттерсе ячӗ те, таврара пӗтӗм чӗрӗ чун шавлама пуҫларӗ.*

1) Пӗр йышши членсене запятой лартса уйӑрӑҫҫӗ.

2) Союзсӑр хутлӑ предложени пайӗсене запятой лартса уйӑрӑҫҫӗ.

3) Уйрӑмлатнӑ сӑмахсене предложенири ытти сӑмахсенчен запятойпа уйӑрӑҫҫӗ.

4) Сыпӑнуллӑ хутлӑ предложени пайӗсем хушшине запятой лартаççӗ.

## VI. Предложенири икӗ точкӑна мӗнле правилӑна пӑхӑнса лартнӑ?

**1.** *Авалтанпах чӑвашсем хушшинче пӗр паха йӑла пулнӑ: вӗсем пӗр-пӗринпе туслӑ пулма калаçса татӑлнӑ та пӗрне-пӗри акам тесе чӗнме пуçланӑ.*

1) Пӗр йышши членсем умӗнхи пӗтӗмлетӳ сӑмахӗ хыççӑн икӗ точка лартаççӗ.

2) Союзсӑр хутлӑ предложенири хыççӑнхи хутсӑр предложени умӗнхине ӑнлантарнӑ чух вӗсем хушшине икӗ точка лартаççӗ.

3) Пӗр йышши членсен ретӗнчи умӗнхин пӗлтерӗшне хыççӑнхисем ӑнлантарса панӑ чухне ӑнлантараканнисем умӗн икӗ точка лартаççӗ.

4) Тӳрӗ пуплев умӗн тӑракан автор сӑмахӗсем хыççӑн икӗ точка лартаççӗ.

**2.** *Тӑван çӗршывран аякра пурӑнакан салтаксен йӑли çапла вӑл: пӗр енчи çынсене тӗл пулсан яланах хӑйсен çӗршывӗ çинчен юратса асӑнаççӗ.*

1) Пӗр йышши членсем умӗнхи пӗтӗмлетӳ сӑмахӗ хыççӑн икӗ точка лартаççӗ.

2) Союзсӑр хутлӑ предложенири хыççӑнхи хутсӑр предложени умӗнхине ӑнлантарнӑ чух вӗсем хушшине икӗ точка лартаççӗ.

3) Пӗр йышши членсен ретӗнчи умӗнхин пӗлтерӗшне хыççӑнхисем ӑнлантарса панӑ чухне ӑнлантараканнисем умӗн икӗ точка лартаççӗ.

4) Тӳрӗ пуплев умӗн тӑракан автор сӑмахӗсем хыççӑн икӗ точка лартаççӗ.

**3.** *Хӗвелпе нӳрӗк чунсӑр чулра та пурнӑç вӑратнӑ: ӑçта килчӗ унта кӗç-вӗç ӳкесле çырантан çакланса лӑска пуçӗсене чикнӗ тӗмӗсем усӑнаççӗ.*

1) Пĕр йышши членсем умĕнхи пĕтĕмлетӳ сăмахĕ хыççăн икĕ точка лартаççĕ.

2) Союзсăр хутлă предложенири хыççăнхи хутсăр предложени умĕнхине ăнлантарнă чух вĕсем хушшине икĕ точка лартаççĕ.

3) Пĕр йышши членсен ретĕнчи умĕнхин пĕлтерĕшне хыççăнхисем ăнлантарса панă чухне ăнлантараканнисем умĕн икĕ точка лартаççĕ.

4) Тӳрĕ пуплев умĕн тăракан автор сăмахĕсем хыççăн икĕ точка лартаççĕ.

**4.** *Сăрталла кăштах хăпарсассăн эпĕ аялалла тепĕр хут çаврăнса пăхрăм: умра, сĕвек тӳременче, хитре-хитре пысăк кавир сарăлса выртать.*

1) Пĕр йышши членсем умĕнхи пĕтĕмлетӳ сăмахĕ хыççăн икĕ точка лартаççĕ.

2) Союзсăр хутлă предложенири хыççăнхи хутсăр предложени умĕнхине ăнлантарнă чух вĕсем хушшине икĕ точка лартаççĕ.

3) Пĕр йышши членсен ретĕнчи умĕнхин пĕлтерĕшне хыççăнхисем ăнлантарса панă чухне ăнлантараканнисем умĕн икĕ точка лартаççĕ.

4) Тӳрĕ пуплев умĕн тăракан автор сăмахĕсем хыççăн икĕ точка лартаççĕ.

**5.** *Библиотекарьсем тӳрех асăрхарĕç: страницăсемсĕр пуçне кунтан тĕнчипе паллă виçĕ картина çухалнă.*

1) Пĕр йышши членсем умĕнхи пĕтĕмлетӳ сăмахĕ хыççăн икĕ точка лартаççĕ.

2) Союзсăр хутлă предложенири хыççăнхи хутсăр предложени умĕнхине ăнлантарнă чух вĕсем хушшине икĕ точка лартаççĕ.

3) Пĕр йышши членсен ретĕнчи умĕнхин пĕлтерĕшне хыççăнхисем ăнлантарса панă чухне ăнлантараканнисем умĕн икĕ точка лартаççĕ.

4) Тӳрĕ пуплев умĕн тăракан автор сăмахĕсем хыççăн икĕ точка лартаççĕ.

**6.** *Хӑйне хӑй упрама та, тыткалама та пӗлет-мӗн вӑл: чылай ҫулланнӑ пулсан та пит-куҫӗнче пӗр йӗр те палӑрмасть.*

1) Пӗр йышши членсем умӗнхи пӗтӗмлетӳ сӑмахӗ хыҫҫӑн икӗ точка лартаҫҫӗ.

2) Союзсӑр хутлӑ предложенири хыҫҫӑнхи хутсӑр предложени умӗнхине ӑнлантарнӑ чух вӗсем хушшине икӗ точка лартаҫҫӗ.

3) Пӗр йышши членсен ретӗнчи умӗнхин пӗлтерӗшне хыҫҫӑнхисем ӑнлантарса панӑ чухне ӑнлантараканнисем умӗн икӗ точка лартаҫҫӗ.

4) Тӳрӗ пуплев умӗн тӑракан автор сӑмахӗсем хыҫҫӑн икӗ точка лартаҫҫӗ.

**7.** *Кӑнтӑртан тахҫанах ҫула тухнӑ кайӑксем ҫаплах ҫитеймеҫҫӗ: вӗсем хаяр сивӗрен хӑраҫҫӗ.*

1) Пӗр йышши членсем умӗнхи пӗтӗмлетӳ сӑмахӗ хыҫҫӑн икӗ точка лартаҫҫӗ.

2) Союзсӑр хутлӑ предложенири хыҫҫӑнхи хутсӑр предложени умӗнхине ӑнлантарнӑ чух вӗсем хушшине икӗ точка лартаҫҫӗ.

3) Пӗр йышши членсен ретӗнчи умӗнхин пӗлтерӗшне хыҫҫӑнхисем ӑнлантарса панӑ чухне ӑнлантараканнисем умӗн икӗ точка лартаҫҫӗ.

4) Тӳрӗ пуплев умӗн тӑракан автор сӑмахӗсем хыҫҫӑн икӗ точка лартаҫҫӗ.

**8.** *Арӑмӗ кил карти енчи ҫӳречерен пӑхать те шак хытса каять: вите айккинче, ҫӳллӗ хӳме ҫумӗнчех, пысӑк кашкӑр тӑрать.*

1) Пӗр йышши членсем умӗнхи пӗтӗмлетӳ сӑмахӗ хыҫҫӑн икӗ точка лартаҫҫӗ.

2) Союзсӑр хутлӑ предложенири хыҫҫӑнхи хутсӑр предложени умӗнхине ӑнлантарнӑ чух вӗсем хушшине икӗ точка лартаҫҫӗ.

3) Пӗр йышши членсен ретӗнчи умӗнхин пӗлтерӗш-

не хыççăнхисем ăнлантарса панă чухне ăнлантараканнисем умĕн икĕ точка лартаççĕ.

4) Тӳрĕ пуплев умĕн тăракан автор сăмахĕсем хыççăн икĕ точка лартаççĕ.

**9.** *Кукка улмуççи турачĕсем айне тĕкĕсем лартать: шултăра пан улмисем пуснипе туратсем çĕрелле авăнса аннă.*

1) Пĕр йышши членсем умĕнхи пĕтĕмлетӳ сăмахĕ хыççăн икĕ точка лартаççĕ.

2) Союзсăр хутлă предложенири хыççăнхи хутсăр предложени умĕнхине ăнлантарнă чух вĕсем хушшине икĕ точка лартаççĕ.

3) Пĕр йышши членсен ретĕнчи умĕнхин пĕлтерĕшне хыççăнхисем ăнлантарса панă чухне ăнлантараканнисем умĕн икĕ точка лартаççĕ.

4) Тĕрĕ пуплев умĕн тăракан автор сăмахĕсем хыççăн икĕ точка лартаççĕ.

**10.** *Чăвашсем каçхи апата хатĕрленеççĕ пулас: тăйлăк-тайлăк пӳрт алăкĕсенчен, уçса хунă кантăксенчен тĕтĕм палкаса тухать.*

1) Пĕр йышши членсем умĕнхи пĕтĕмлетӳ сăмахĕ хыççăн икĕ точка лартаççĕ.

2) Союзсăр хутлă предложенири хыççăнхи хутсăр предложени умĕнхине ăнлантарнă чух вĕсем хушшине икĕ точка лартаççĕ.

3) Пĕр йышши членсен ретĕнчи умĕнхин пĕлтерĕшне хыççăнхисем ăнлантарса панă чухне ăнлантараканнисем умĕн икĕ точка лартаççĕ.

4) Тӳрĕ пуплев умĕн тăракан автор сăмахĕсем хыççăн икĕ точка лартаççĕ.

**11.** *Илюк хĕпĕртерĕ: вĕсен çулĕ унталла выртать, çавăнпа пĕчĕк вăрманта сывлăш çавăрса илме май пулĕ.*

1) Пĕр йышши членсем умĕнхи пĕтĕмлетӳ сăмахĕ хыççăн икĕ точка лартаççĕ.

2) Союзсăр хутлă предложенири хыççăнхи хутсăр предложени умĕнхине ăнлантарнă чух вĕсем хушшине икĕ точка лартаççĕ.

3) Пĕр йышши членсен ретĕнчи умĕнхин пĕлтерĕшне хыççăнхисем ăнлантарса панă чухне ăнлантараканнисем умĕн икĕ точка лартаççĕ.

4) Тӳрĕ пуплев умĕн тăракан автор сăмахĕсем хыççăн икĕ точка лартаççĕ.

**12.** *Ял çыннишĕн халĕ кашни сехет, кашни минут çав тери хаклă: пур ĕçе те хăвăрт та лайăх туса пĕтермелле.*

1) Пĕр йышши членсем умĕнхи пĕтĕмлетӳ сăмахĕ хыççăн икĕ точка лартаççĕ.

2) Союзсăр хутлă предложенири хыççăнхи хутсăр предложени умĕнхине ăнлантарнă чух вĕсем хушшине икĕ точка лартаççĕ.

3) Пĕр йышши членсен ретĕнчи умĕнхин пĕлтерĕшне хыççăнхисем ăнлантарса панă чухне ăнлантараканнисем умĕн икĕ точка лартаççĕ.

4) Тӳрĕ пуплев умĕн тăракан автор сăмахĕсем хыççăн икĕ точка лартаççĕ.

**13.** *Кашкăрпа тилĕ кĕрĕкĕсем йăлтах çурăлса-çĕтĕлсе пĕтнĕ: вĕсем халĕ çăм тăкаççĕ.*

1) Пĕр йышши членсем умĕнхи пĕтĕмлетӳ сăмахĕ хыççăн икĕ точка лартаççĕ.

2) Союзсăр хутлă предложенири хыççăнхи хутсăр предложени умĕнхине ăнлантарнă чух вĕсем хушшине икĕ точка лартаççĕ.

3) Пĕр йышши членсен ретĕнчи умĕнхин пĕлтерĕшне хыççăнхисем ăнлантарса панă чухне ăнлантараканнисем умĕн икĕ точка лартаççĕ.

4) Тӳрĕ пуплев умĕн тăракан автор сăмахĕсем хыççăн икĕ точка лартаççĕ.

## VII. Предложенисене вуласа тухăр та ĕçсене тăвăр

**I.** А. *Вăййа тухнă йăрăс пӳллĕ илемлĕ чăваш пикисем пекех туйăнаççĕ мана вĕсем халь.*

Ă. *Çул хĕрринче, тăрă шывлă пĕчĕк кӳлĕсем пуçланчĕç.*

Б. *Эпĕ çак илемпе киленмесĕр иртсе кайма пултараймарăм: çут çанталăк хăйĕн асамлăхĕпе, илемĕпе ялан чуна тыткăнлать.*

В. *Вĕсен тăрă куçĕсенче шурă хурăнсем шереписене тураса ларни уççăнах курăнать.*

1. Текст пултăр тесен предложенисене мĕнле йĕркепе вырнаçтармалла?

1) Ă, В, А, Б 3) А, Ă, Б, В
2) А, Б, Ă, В 4) В, Ă, Б, А

2. Йăнăш ăнлантарнă предложени хăшĕ?

1) А — пăхăнуллă хутлă предложени
2) Ă — хутсăр, икĕ тĕп членлă предложени
3) Б — союзсăр хутлă предложени
4) В — пăхăнуллă хутлă предложени

3. Хăш предложенире чарăну палли лартмалли йĕркене пăхăнман?

1) А 2) Ă 3) Б 4) В

**II.** А. *Вăл ватă хурама çумĕнче аслашшĕ йĕс пăрăх татăкĕнчен ăсталаса панă шăхличе калать.*

Ă. *Кирук пин-пин тĕспе ялкăшакан куçа йăмăхтаракан анлă улăх хĕрринче ларать.*

Б. *Ĕмĕрĕпе пĕччен ларса тунсăхланă йывăç, типшĕнсе хăрма пуçланăскер, кĕтӳçĕ юррине пĕр шавсăр тăнлать.*

В. *Кĕвĕ хыççăн кĕвĕ шăранса юхать ытарайми илемлĕ таврана.*

1. Текст пултăр тесен предложенисене мĕнле йĕрке-пе вырнаçтармалла?

1) А, Ă, Б, В 3) Ă, А, В, Б
2) Б, А, Ă, В 4) В, А, Ă, Б

2. Йăнăш ăнлантарнă предложени хăшĕ?

1) А — пăхăнуллă хутлă предложени
2) Ă — хутсăр, икĕ тĕп членлă предложени
3) Б — союзсăр хутлă предложени
4) В — хутсăр, икĕ тĕп членлă предложени

3. Хăш предложенире чарăну палли лартмалли йĕрке-не пăхăнман?

1) А 2) Ă 3) Б 4) В

**III.** А. *Ылтăн пуçлă пулăсем майлах курăнаççĕ хăйсем.*

Ă. *Вĕсен ĕмĕлкисем тĕксĕм шыв çине ӳкнĕ те, хура тĕслĕ курăнаççĕ.*

Б. *Тавăт шывĕ çыранĕнчи йăмрасем пăхаттирсем пек мăннăн курăнса, çил кассипе тарăннăн хашлатса сыв-лаççĕ.*

В. *Вĕтĕ-вĕтĕ хум вылянăвĕнче çăлтăрсем чӳхенеççĕ: те тӳпере вĕсем, те пĕве тĕпĕнче?*

1. Текст пултăр тесен предложенисене мĕнле йĕрке-пе вырнаçтармалла?

1) А, Ă, Б, В 3) Б, Ă, В, А
2) В, А, Ă, Б 4) Ă, А, Б, В

2. Йăнăш ăнлантарнă предложени хăшĕ?

1) А — хутсăр, икĕ тĕп членлă предложени
2) Ă — сыпăнуллă хутлă предложени
3) Б — хутсăр, икĕ тĕп членлă предложени
4) В — союзсăр хутлă предложени

3. Хăш предложенире чарăну палли лартмалли йĕрке-не пăхăнман?

1) А 2) Ă 3) Б 4) В

**IV.** А. *Утнă май, кĕвĕ шăрантаракан шăпчăксене итлетпĕр.*

Ă. *Унăн икĕ айккипе ешĕл тум тăхăннă ĕшнесенче чăлт шурă çĕмĕрт йывăççисем ырă шăршипе хăйсем патне туртаççĕ.*

Б. *Ял çуммипе çурхи пăтранчăкран тасалнă çапçутă Çарăмсан юхса выртать.*

В. *Эпир çĕнĕ юлташсемпе çав ĕшнесене çул тытатпăр.*

1. Текст пултăр тесен предложенисене мĕнле йĕркепе вырнаçтармалла?

1) А, Б, В, Ă  3) А, Ă, Б, В
2) Б, Ă, В, А  4) Ă, А, В, Б

2. Йăнăш ăнлантарнă предложени хăшĕ?

1) А — хутсăр, пĕр тĕп членлă предложени
2) Ă — пăхăнуллă хутлă предложени
3) Б — хутсăр, икĕ тĕп членлă предложени
4) В — хутсăр, икĕ тĕп членлă предложени

3. Хăш предложенире чарăну палли лартмалли йĕркене пăхăнман?

1) А  2) Ă  3) Б  4) В

**V.** А. *Чим, юнашарах тепĕр карта, леререх виççĕмĕшĕ...*

Ă. *Çак сасă тунсăхлă пулин те, ылтăн евĕр çуталса тăракан çак вăхăт çеммипе тĕлĕнмелле килĕшÿллĕ.*

Б. *Янкăр кăвак тÿпене çурса, çуначĕсене çăмăллăн та, ирĕклĕн вылятса виç кĕтеслĕ кайăк хур карти кăнтăралла вĕçет.*

В. *«Сыв пул, сыв пул, сыв пул», — тенĕн илтĕнет хур кайăк сасси.*

1. Текст пултăр тесен предложенисене мĕнле йĕркепе вырнаçтармалла?

1) В, А, Ă, Б    3) Б, Ă, В, А
2) Б, А, В, Ă    4) Ă, Б, В, А

2. Йăнăш ăнлантарнă предложени хăшĕ?

1) А — хутсăр, пĕр тĕп членлă предложени
2) Ă — пăхăнуллă хутлă предложени
3) Б — хутсăр, икĕ тĕп членлă предложени
4) В — пăхăнуллă хутлă предложени

3. Хăш предложенире чарăну палли лартмалли йĕркене пăхăнман?

1) А    2) Ă    3) Б    4) В

**VI.** А. *Уйăхсене вăл вун икĕ пӳлĕм уйăрса панă та вĕсенче вара çынсен савăнăçĕпе хуйхи, телейĕпе ĕмĕчĕ, ĕçĕпуçĕпе кахаллăхĕ, сăтăрĕпе элекĕ, шӳчĕпе тарăхăвĕ — пурте сисĕнкĕсĕр пуçтарăнса, тулса пыраççĕ.*

Ă. *Вăл çеккунтсемпе минутсене, сехетсемпе кунсене пĕр çĕре васкавлăн пуçтарать те — эрне туса хурать.*

Б. *Вăхăт пĕр вырăнта тăма пултараймасть, вăл шеллесе те тăмасть, кĕтмест.*

В. *Эрнесене, кирпĕч çине кирпĕч хурса купаланă пек, йĕркипе майласа хурать те— уйăх тултарать.*

1. Текст пултăр тесен предложенисене мĕнле йĕркепе вырнаçтармалла?

1) А, Ă, Б, В    3) Б, Ă, В, А
2) В, Б, Ă, А    4) А, Ă, Б, В

2. Йăнăш ăнлантарнă предложени хăшĕ?

1) А — сыпăнуллă хутлă предложени
2) Ă — хутсăр, пĕр тĕп членлă предложени
3) Б — союзсăр хутлă предложени
4) В — сыпăнуллă хутлă предложени

3. Хăш предложенире чарăну палли лартмалли йĕркене пăхăнман?

1) А 2) Ă 3) Б 4) В

**VII.** А. *Теприсем, хăюллăраххисем, сывлăшĕ питĕрĕннине туйсан та çӳлеллех талпăнаççĕ.*

Ă. *Вăл хăй юрри хыççăн хĕвел патнелле кармашать те кармашать, сывлăшĕ питĕрĕннине сиссен çеç аялалла анма тытăнать.*

Б. *Çавăн чух Петюк мана тӳпери тăрисем çинчен пĕр тĕлĕнмелле япала каласа пачĕ: тăри вĕççĕр-хĕрсĕр тӳпене питĕ хытă юратать иккен.*

В. *Вара кайран сывлăш çитменнипе чĕрисем çурăлса каяççĕ те çĕре чул муклашки пек персе анаççĕ вĕсем.*

1. Текст пултăр тесен предложенисене мĕнле йĕркепе вырнаçтармалла?

1) А, Ă, Б, В 3) Ă, Б, А, В
2) А, Б, В, Ă 4) Б, Ă, А, В

2. Йăнăш ăнлантарнă предложени хăшĕ?

1) А — пăхăнуллă хутлă предложени
2) Ă — хутсăр, икĕ тĕп членлă предложени
3) Б — союзсăр хутлă предложени
4) В — сыпăнуллă хутлă предложени

3. Хăш предложенире чарăну палли лартмалли йĕркене пăхăнман?

1) А 2) Ă 3) Б 4) В

**VIII.** А. *Çыран леш енчи катара йывăç тĕмĕсем хĕрлĕншуррăн палăраççĕ.*

Ă. *Акă ун мăнаçлă та яка ытамĕнче çип çапнă пек тӳп-тӳрĕ хĕвел юпи выртать, инçетре-инçетре юхан шывăн йăмăх кăвак çулĕ палăрать.*

Б. *Мĕн тери капăр вăл çуллахи пĕлĕтсĕр кун.*

В. *Çав çул, çăмăл кĕрен сывлăшпа хутшăнса кайнă пек, туйăнать.*

1. Текст пултăр тесен предложенисене мĕнле йĕркепе вырнаçтармалла?

1) А, Ă, Б, В  3) Б, В, Ă, А
2) Б, Ă, В, А  4) А, Б, В, Ă

2. Йăнăш ăнлантарнă предложени хăшĕ?

1) А — хутсăр, икĕ тĕп членлă предложени
2) Ă — союзсăр хутлă предложени
3) Б — хутсăр, икĕ тĕп членлă предложени
4) В — пăхăнуллă хутлă предложени

3. Хăш предложенире чарăну палли лартмалли йĕркене пăхăнман?

1) А  2) Ă  3) Б  4) В

## VIII. Текста вулăр та тестсемпе ĕçсене тăвăр

### I

1. Тавралăха, такам шăналăкпа витнĕ евĕр, каç сĕмĕ хупларĕ. 2. Пĕр сехет тĕттĕмленсе тăчĕ, унтан тул çутăлчĕ. 3. Акă вăл, шурă каç тени! 4. Шурăмпуç кайăкĕ чăрăш тăрринче юрă юрлать: пĕр куçĕпе каçхи шурăмпуçа пăхса ăсатать, тепринпе ирхи шурăмпуçа кĕтсе илет. 5. Пĕтĕм вăрттăнлăх умра, мĕн курăнманни йăлт куç умĕнче. 6. Кунтах çеçкисене чăмăртаса кăнтăрлахи чечексем çывăраççĕ. 7. Авă тĕттĕм вăрманта каçхи чечексем вăранаççĕ, шикленсе те тĕлĕнсе хăйсен куç хăрпăкĕсене, çеçкин çулçисене, хуллен уçаççĕ те çӳлте мăнаçлăн шăвакан уйăх еннелле туртăнаççĕ. 8. Çырма çийĕн тĕтре çĕкленнĕ: шывра юлхав пулăсем йĕпе тутисемпе чăплаттаркаласа тем хыпаççĕ. 9. Хăмăшсем шыв тĕкĕрĕ çине тĕллесе пăхнă, анчах вĕсен мĕлкисем кăшт та хускалмаççĕ. 10. Пур япала та (1) ĕмĕлке пек (2) сывлăшра аран-аран тытăнса тăрать пек: курăнать те (3) курăнмасть те (4) илтĕнет те (5) илтĕнмест те. 11. Сыв-

лама чарăннă йывăçсем пилĕк таран тĕтре ăшне пытаннă. 12. Çак сисĕмлĕ шăплăхра чăрăш йĕппи ӳкнĕ сасса та илтме пулать. 13. Çăлтăрсем йăлтăркка тĕслĕ пулса ĕлкĕреймеççĕ, часах сӳнеççĕ, курăнми пулаççĕ. 14. Шуçăм та сӳнсе ĕлкĕреймест, çĕнĕрен ялкăшма пуçлать. 15. Çак илемпе пĕр вĕçĕмсĕр киленсе тăрас килет. (*Н.Сладков* çырнинчен.)

1. 9—12-мĕш предложенисене вуласа тухăр. Тĕп пайĕ япала ячĕпе пĕтекен анлă сăмах майлашăвне тупăр. Унăн тĕп пайĕ хăй пĕлтерĕшлĕ пĕр сăмахран, пăхăнулли икĕ сăмахран тăтăр. Ку сăмах майлашăвĕ хăш предложенире?

1) 9 2) 10 3) 11 4) 12

2. Кăтартнă предложенисенчен хăшĕ сыпăнуллă хутлă пулать?

1) 7 2) 9 3) 4 4) 10

3. 10-мĕш предложение вуласа тухăр. Хăш цифрăсем предложенири запятойсемпе тӳр килеççĕ?

1) 1,2,3,4,5 3) 2,3,4,5
2) 1,2,3,4 4) 1,2,3,5

4. 12—15-мĕш предложенисенчен хăшĕ пĕр тĕп членлă пулать?

1) 12 2) 13 3) 14 4) 15

5. Определени ушкăнне кĕрекен пăхăнуллă пай хăш предложенире тĕл пулать?

1) 1 2) 12 3) 11 4) 5

6. Хăш предложенире пĕр йышши членсене запятойпа уйăрнă?

1) 1 2) 3 3) 7 4) 9

## II

1. Янӑрать юрӑ. 2. Хӑмӑшпа хӑях хушшипе шыв юхнӑ чухнехи пек тикӗссӗн, тӳлеккӗн пырать вӑл. 3. Акӑ шыв юхӑмӗ шурӑ чуллӑ вырӑна тухать. 4. Шӑмпӑлтатать, тӑкӑртатать, чул пӳлнине сирсе малалла ӑнтӑлать. 5. Ҫырана пырса ҫапӑнать юхӑм (1) унтан каялла кайса пӗр вӑя пуҫтарӑнать (2) хӑйӗн ирӗк ҫулӗпе шурӑ кӑпӑк кӑларса уҫӑ та (3) ирӗк ҫӗрелле ҫул хывать. 6. Пӗр кӗвӗрен тепӗр кӗвве куҫма хӗр упраҫсене ним те мар, мӗншӗн тесен вӗсем пин-пин сӑвӑ-кӗвӗ пӗлеҫҫӗ. 7. Ӑруран ӑрӑва, улахран улаха куҫса пынӑ-ҫке кашни кӗвви, кашни йӑли-йӗрки. 8. Акӑ такмакӗ тапранса каять те, каччӑсем хӗрӗсене ташша чӗнеҫҫӗ. 9. Ҫав хушӑра, хӗрӗсем сисмен чух каччисем вӗсен чӗрҫи-арки ҫине пырса лараҫҫӗ, мӑйран ыталаса илеҫҫӗ, унтан-кунтан тӗккелеҫҫӗ. 10. Хӗрӗсем вара, куншӑн савӑнаҫҫӗ пулин те, «кай-кай», «ай, санпала», «ай, шӑпӑрлан» текелесе хирӗҫем пекки тукалаҫҫӗ. 11. Ҫур ҫӗр тӗлнелле вара ӑшӑ кӑмакаран хӗрсем хӑйсем ятарласа хатӗрленӗ улах пӑтти е шарккӑвӗ кӑлараҫҫӗ. 12. Ҫакӑн хыҫҫӑн сӗтел тавра пуҫтарӑнса лараҫҫӗ те йышпа, пысӑк ӗҫ тунӑ евӗр, апатланаҫҫӗ. 13. Ҫав вӑхӑтра тӗпел кукринче, кӑмака умӗнче, иккӗн-виҫҫӗн юрласа лараҫҫӗ. 14. Юрӑ яланах вырӑнлӑ: вӑл чуна пусарать, ҫунакан ҫулӑма сӳнтерет, лӑпкӑлӑх кӳрет. 15. Тепӗр чухне вара урӑх майлӑ та пулса тухать: вырӑнтан каскана хускатать, ҫунатсӑра ҫунат хушать, мӗскӗнлӗхе сирсе, алла ялав тыттарса малалла ыткӑнтарать. 16. Вӑйлӑ вӑл, хӑватлӑ вӑл юрӑ. (*Г. Ефимов* ҫырнинчен.)

1. 1—5-мӗш предложенисене вуласа тухӑр. Тӗп пайӗ япала ячӗпе пӗтекен анлӑ сӑмах майлашӑвне тупӑр. Унӑн тӗп пайӗ хӑй пӗлтерӗшлӗ пӗр сӑмахран, пӑхӑнулли икӗ сӑмахран тӑтӑр. Ку сӑмах майлашӑвӗ хӑш предложенире?

1) 2 2) 3 3) 4 4) 5

2. Кăтартнă предложенисенчен хăшĕ сыпăнуллă хутлă пулать?

1) 12 2) 8 3) 5 4) 6

3. 5-мĕш предложение вуласа тухăр. Хăш цифрăсем предложенири запятойсемпе тӳр килеççĕ?

1) 1,2,3 2) 1,2 3) 2,3 4) 1,3

4. 9—12-мĕш предложенисенчен хăшĕ пĕр тĕп членлă пулать?

1) 12 2) 9 3) 10 4) 11

5. Определени ушкăнне кĕрекен пăхăнуллă пай хăш предложенире тĕл пулать?

1) 11 2) 12 3) 9 4) 2

6. Хăш предложенире пĕр йышши членсене запятойпа уйăрнă?

1) 6 2) 2 3) 8 4) 12

## III

1. Пыратăп хырлăхпа, мана хирĕç ачасен шавлă ушкăнĕ çывхарать. 2. Паян, тĕрлĕ чĕр чун пурăнакан вăрман çинчен каласа панă иккен вĕсене вĕрентекен. 3. — Хырлăхне хăйне куртăр-и? 4. Учитель çавăн ятлă тискер кайăк çинчен каласа памарĕ-и сире? — ыйтатăп ачасенчен. 5. — Çук, каласа памарĕ. 6. Ачасем ăнланмасăр кулкалаççĕ. 7. Ахалех кулкалаççĕ! 8. Акă вăл, çав тискер кайăк — хырлăх, пирĕн умрах тăрать! 9. Пăхăр пек сарă хăй, симĕс çилхи йĕплĕ. 10. Çĕршер йăрăс ура çинче тăрать вăл, хăш-пĕр çĕрте хăвăл куçĕсем пур. 11. Сăмса айĕн хуллен тем мăкăртатать. 12. Сасси унăн хулăн та лăпкă, канлĕ, анчах вăл хăш-пĕр чух ӳлеме, мĕкĕрме, хăратма та пултарать! 13. Йĕплĕ çилхе тăратăнать, ак-ак сан çине йăтăнса анас пек. 14. Çил чарăнать те, тискер кайăк, каллех ырă кăмăллăн та ачашшăн сывлама пуçланăскер, ывăнса тĕлĕрсе каять, хăйĕн йĕплĕ

сăмсипе мăшлаттарма пуçлать. 15. Хĕвел шевлисем пытаннă туратсем йăлтăр-ялтăр çиçкелеççĕ. 16. Симĕс çӳçĕ ăшне вăрманти ахрăмсем пытанаççĕ. 17. Чикекен питĕ пысăк тискер кайăк. 18. Хаяр та, ырă та пулать вăл. 19. Ытти тискер кайăксем евĕрлех, анчах вĕсем пек чупса çӳремест кăна. 20. Ачасем тĕлĕнмелле тискер кайăк çине пăхаççĕ те шавламаççĕ. 21. Унăн симĕс йĕпписене сăтăраççĕ — вăл чĕнмест. 22. Килти ачаш кушакпа ыр кăмăллă йытă пекех туйăнать. 23. Ĕненес те килмест (1) ăна алла вĕрентменнине (2) вăл тискер кайăк иккенне (3) симĕс хăлхинчен ачашласа туртас килет. (*Н.Сладков* çырнинчен.)

1. 1—5-мĕш предложенисене вуласа тухăр. Тĕп пайĕ япала ячĕпе пĕтекен анлă сăмах майлашăвне тупăр. Унăн тĕп пайĕ хăй пĕлтерĕшлĕ пĕр сăмахран, пăхăнулли тăвату сăмахран тăтăр. Ку сăмах майлашăвĕ хăш предложенире?

1) 1 2) 2 3) 4 4) 5

2. Кăтартнă предложенисенчен хăшĕ сыпăнуллă хутлă пулать?

1) 18 2) 19 3) 20 4) 14

3. 23-мĕш предложение вуласа тухăр. Хăш цифрăсем предложенири запятойсемпе тӳр килеççĕ?

1) 1,2,3 2) 2,3 3) 1,3 4) 1,2

4. 17—20-мĕш предложенисенчен хăшĕ пĕр тĕп членлă пулать?

1) 20 2) 19 3) 17 4) 18

5. Определени ушкăнне кĕрекен пăхăнуллă пай хăш предложенире тĕл пулать?

1)10 2) 12 3) 22 4) 15

6. Хăш предложенире пĕр йышши членсене запятойпа уйăрнă?

1) 9 2) 1 3) 18 4) 8

## IV

1. Туслăх çăлтăрĕ... 2. Туслăх вăл пушă çĕрте, нимĕн те шăтман-ӳсмен вырăнта аталанмасть. 3. Пушă çĕрте — пушăлăх кăна. 4. Пушăлăха тултарма пулать теççĕ, анчах мĕнпе тултаратăн вĕт? 5. «Мĕн акатăн, çавă шăтать», — теместчĕç-и-ха халăхра? 6. «Туслăх çăлтăрĕ...» 7. Викентий Семенович ăшă кăмăлпа каланă сăмах хускатса ямарĕ-ши, Шевлепи, сан кăмăлна, сан чунна? 8. Туслăх çăлтăрĕ... 9. Чăнах та (1) ун тавралла ырă та (2) усал та (3) явăнма пултарать. 10. Çăлтăр çутине хирĕç тăман тухать те, ăна хура пĕлĕт хуплать. 11. Çăлтăрĕ пурпĕрех çăлтăр пулса юлать. 12. Тăман тамалать, хура пĕлĕт сирĕлет: çăлтăр çути таçтан йăлтăртатса çутатать. 13. «Çăлтăра çăмахпа персе антараймăн, хĕвеле сăхманпа хуплаймăн», — тенĕ авалах пирĕн асаттен аслă ашшĕсемпе кукамай-асаннесем. 14. Аван та витĕмлĕ каланă-çке. 15. Мĕнле тăрăхлани, юптарни, ытарлă калани пур çав сăмахсенче. 16. Çăлтăра кам çăмахпа перет?! 17. Хĕвеле тата кам сăхманпа хуплĕ? 18. Çăмахĕ чуста кăна, унпа пенин усси те çук. 19. Сăхманпа алăка карса лартма та май килмест. 20. Халăх сăмахĕ, ĕмĕрсем урлă туптаннăскер, пирĕн патăмăра çитнĕ. 21. Вăл вутчуль евĕр çилпе çиййĕнсе якалнă, çумăрпа шӳнĕ, çăвăнса тасалнă, сивĕре пĕрĕнсе çирĕпленнĕ, ăшăра аслатиллĕ çумăр вăхăтĕнчи çиçĕмпе вут-хĕмне пухнă. 22. Халĕ вара, халăх сăмахлăхĕ вăй илсе аталаннă вăхăтра, çĕнĕ пурнăçпа йăла-йĕрке вăй илнĕ тапхăрта ылтăн пĕрчи пек таса сăмахсем асра упранаççĕ. 23. Çапла, çутта хирĕç сĕмлĕх тăрать, ырра усал хупласа хурас ĕмĕтпе пурăнать. 24. Çав усаллăх çумĕнче элек-мелек çунатне сарса яма тăрăшать. 25. Анчах туслăх туйăмĕ нимĕнрен вăйлăрах иккен. 26. Ун чухне Шевлепи çинчен сарнă элеке тус-юлташĕсем ĕненмерĕç, ăна тӳрре кăларчĕç. (*Г.Ефимов* çырнинчен.)

1. 21—24-мĕш предложенисене вуласа тухăр. Тĕп пайĕ япала ячĕпе пĕтекен анлă сăмах майлашăвне тупăр.

Унăн тĕп пайĕ хăй пĕлтерĕшлĕ икĕ сăмахран, пăхăнулли икĕ сăмахран тăтăр. Ку сăмах майлашăвĕ хăш предложенире?

1) 21 2) 22 3) 23 4) 24

2. Кăтартнă предложенисенчен хăшĕ сыпăнуллă хутлă пулать?

1) 12 2) 9 3) 18 4) 10

3. 9-мĕш предложение вуласа тухăр. Хăш цифрăсем предложенири запятойсемпе тӳр килеççĕ?

1) 1,2,3 2) 1,2 3) 2,3 4) 1,3

4. 17—20-мĕш предложенисенчен хăшĕ пĕр тĕп членлă пулать?

1) 17 2) 18 3) 19 4) 20

5. Определени ушкăнне кĕрекен пăхăнуллă пай хăш предложенире тĕл пулать?

1) 21 2) 7 3) 11 4) 20

6. Хăш предложенире пĕр йышши членсене запятойпа уйăрнă?

1) 21 2) 20 3) 18 4) 4

## V

1. Ĕç хыççăн эпĕ уçălса çӳрес тесе хула садне тухса утрăм. 2. Акă халь аллея тăрăх пыратăп та, мана сипсимĕс çи-пуç тăхăннă йывăççем шăппăн алă çупса саламланăн туйăнать. 3. Тĕрлĕрен кайăк юррисем хăлхаран тухма пĕлмеççĕ. 4. Хĕвел хăйĕн ылтăн пайăркисемпе йывăççем витĕр çул хывса сада ытарайми сăн кĕртет. 5. Чипертен те чипер хĕр пек илемлĕ тавралăх... 6. Умри Атăл, çурхи шывпа тулнăскер, инçете сарăлса выртать. 7. Унăн хумĕсем çурçĕр енчен вăштăр-вăштăр вĕрсе иртен сулхăн çилпеле умлăн-хыçлăн пĕр вĕçĕмсĕр ку еннелле кумаççĕ. 8. Шап-шурă пăрахут ирĕккĕн те мăнаçлăн анать туран. 9. Халăх хĕвĕшекен çыран хĕррин-

че, хула сачĕпе тĕлме-тĕл вырнаçнă шыв станцийĕнче пĕр çамрăк икĕ аллине чĕкеçле сарса вышка çинчен шыва чăмать. 10. Акăшсем пек чăлт шурă тумланнă çамрăксем кимĕсемпе талккăшĕпех ярăнаççĕ. 11. Атăл çинче, яш кĕрĕм хавасланнă вăхăтра хут купăс кĕвви, çĕкленӳллĕ те савăнăçлă юрă янăраса тăрать. 12. Леш енчен, вĕçĕ-хĕррисĕр тăсăлса выртакан улăх хыçĕнчен, çук, татах та леререхрен, кăвак тĕтрепе витĕннĕ инçетлĕхренех, мамăк пек шупка пĕлĕтсем капанĕ-капанĕпе кăтраланса тӳпенелле кармашаççĕ. 13. Вĕсем (1) вăрăм çула тухнă евĕр (2) хĕвел тухăçнелле (3) ерипен шăваççĕ. 14. Улăхри лаша кĕтĕвне аса илтереççĕ. (*А.Медведев* çырнинчен.)

1. 11—14-мĕш предложенисене вуласа тухăр. Тĕп пайĕ япала ячĕпе пĕтекен анлă сăмах майлашăвне тупăр. Унăн тĕп пайĕ хăй пĕлтерĕшлĕ пĕр сăмахран, пăхăнулли виçĕ сăмахран тăтăр. Ку сăмах майлашăвĕ хăш предложенире?

1) 12 2) 13 3) 14 4) 11

2. Кăтартнă предложенисенчен хăшĕ сыпăнуллă хутлă пулать?

1) 11 2) 2 3) 8 4) 7

3. 13-мĕш предложение вуласа тухăр. Хăш цифрăсем предложенири запятойсемпе тӳр килеççĕ?

1) 1,2,3 2) 1,2 3) 2,3 4) 1,3

4. 5—8-мĕш предложенисенчен хăшĕ пĕр тĕп членлă пулать?

1) 6 2) 7 3) 8 4) 5

5. Определени ушкăнне кĕрекен пăхăнуллă пай хăш предложенире тĕл пулать?

1) 9 2) 10 3) 4 4) 7

6. Хăш предложенире пĕр йышши членсене запятойпа уйăрнă?

1) 6 2) 2 3) 9 4) 11

## VI

1. Мулкачкассинче халĕ пĕр вăтăр кил пулĕ. 2. Ĕлĕкрех пысăкрах йышпа карталанса ларнă-тăр вĕсем. 3. Кайран, хуласем мăнăланса, ялсем пĕчĕкленсе пыма тапратсассăн вăл сайралса юлнă. 4. Паян унта та кунта (1) вĕлтренпе хупах пуснă кил вырăнĕсем (2) яланлăхах питĕрĕннĕ хăртăк-хартăк (3) ӳпĕнчĕк пӳртсем курăнкалаççĕ. 5. Ялĕ капăр çĕре вырнаçнă вара. 6. Пĕр урамĕ хыçĕпе тăп-тăрă юхан шыв, Çăрттан ятлăскер, шăнкăртатса иртет. 7. Ун авкаланчăкĕ тăршшĕпех йĕре хăвасем тураттисене шывалла хурлăн пĕксе ӳсеççĕ. 8. Кассăн-кассăн хура çирĕксем хунаса кайнă. 9. Тепĕр урам хыçĕнче çавра пĕве тĕкĕрĕ çуталса выртать, ăна та йĕри-тавраллах йăвă хăмăш-хăях çавăрса илнĕ. 10. Унран çур çухрăмранах ăвăслă-юманлă хутăш вăрман хупăрланса тăрать. 11. Ял пуçĕнчен леререх тата вăрмансем кашласа лараççĕ. 12. Хайхи леш Çăрттан шывĕ те таçтан вĕсен варринченех йăрлатса тухать. 13. Çăра йывăçлăхран чашкăрса аннăранах-тăр ун шывĕ пăтранчăк мар та, тарăнрах авăр тĕпĕ те янкăрах курăнать ав. 14. Кунашкал таса юхан шыв питĕ сайра тĕл пулать хальхи вăхăтра. 15. Ахальтен-и унта çăрттанĕ çеç мар, уланкă та, хура пулă та ĕрчет. 16. Ял таврашĕнчи кашни кукăртах чĕвĕлти кайăксем янкăс юрă-çемĕ шăрантараççĕ. 17. Вут-шанкă та, утă-курăк та, кăмпа-çырла та лăках-тăр унта. 18. Пĕр шухăшсăр пурăнмалла ĕнтĕ этемĕн çакнашкал илемлĕ те тулăх кĕтесре. 19. Анчах темĕн çитмест çынсене: çак çăтмахри пек ырлăхран та темскер шырама тухса каяççĕ. (*В.Петров* çырнинчен.)

1. 16—19-мĕш предложенисене вуласа тухăр. Тĕп пайĕ япала ячĕпе пĕтекен анлă сăмах майлашăвне тупăр. Унăн тĕп пайĕ хăй пĕлтерĕшлĕ икĕ сăмахран, пăхăнулли икĕ сăмахран тăтăр. Ку сăмах майлашăвĕ хăш предложенире?

1) 16 2) 17 3) 18 4) 19

2. Кăтартнă предложенисенчен хăшĕ сыпăнуллă хутлă?

1) 15    2) 13    3) 19    4) 12

3. 4-мĕш предложение вуласа тухăр. Хăш цифрăсем предложенири запятойсемпе тӳр килеççĕ?

1) 1,2,3    2) 1,2    3) 2,3    4) 1,3

4. 16—19-мĕш предложенисенчен хăшĕ пĕр тĕп членлă пулать?

1) 16    2) 17    3) 19    4) 18

5. Определени ушкăнне кĕрекен пăхăнуллă пай хăш предложенире тĕл пулать?

1) 4    2) 6    3) 7    4) 10

6. Хăш предложенире пĕр йышши членсене запятойпа уйăрнă?

1) 6    2) 9    3) 13    4) 15

## VII

1. Çу уйăхĕн пуçламăшĕнче аслати хавассăн кĕрлеттерсе ячĕ те, пĕтĕм чĕрĕ чун шавлама пуçларĕ. 2. Вăрман тĕрлĕ сасăпа тулчĕ, унта çу уйăхĕ янăравлăн пырса кĕчĕ. 3. Мĕн тери ырă! 4. Мĕн сасă пама пултарать, çавă пурте хаваслăн кĕрлесе тăрать. 5. Таçта тĕксĕм кăмăллă чĕмсĕр тăманасем мăкăртатнă сасă илтĕнет. 6. Унтах хăравçă мулкачсем хăюллăн та хыттăн кăшкăраççĕ. 7. Вăрманта (1) лапкăшĕпех шăхăрни (2) çуйхашни (3) шаккани (4) юрлани (5) мĕкĕрни илтĕнсе тăрать. 8. Пĕр йышши юрăсене вăрмана аякри кăнтăртан вĕçсе çитнĕ кайăксем хăйсемпе пĕрле илсе килчĕç, теприсем вырăнтах çуралчĕç. 9. Çав юрăсем вăраха кайнă уйрăлу хыççăн пĕр-пĕринпе тĕл пулчĕç те савăнăçа ниçта чикеймесĕр ирхи шуçăмран пуçласа каçхи шуçăмччен чарăнмасăр янăрарĕç. 10. Ăшăнса пăсланакан чăтлăхсенче, юр ирĕлсе пĕтнĕ пирки пĕчĕк юхан шывсем çиллессĕн шăнкăртатаççĕ. 11. Шыв тĕкĕрĕ çинче

хайсен сăнне ылтăн хăвасем тинкереççĕ, пĕр çырантан тепĕр çыран çине шурă чечекпе витĕннĕ çĕмĕртсем чĕлтĕр-чĕлтĕр кĕпер хываççĕ. 12. Аслатиллĕ çумăр паçăрах иртсе кайнă, анчах хурăнсем çинче пĕр çулçăран тепĕр çулçă çине, картлашкаран картлашкана тумланă пек, ашкăнчăк çумăр пĕрчисем сикеççĕ. 13. Вĕсем çулçă вĕçĕнче хăранипе чĕтре-чĕтре çакăнса тăраççĕ те йăлтăр-ялтăр çиççе кӳлленчĕке ӳкеççĕ. 14. Çĕр çинче хĕл каçнă пĕркеленчĕк типĕ çулçăсем те пулин чĕрĕлнĕ: е çĕр çийĕн шăши пек кăштăртатса чупаççĕ, е, кайăк кĕтĕвĕ пек, сывлăша çĕкленеççĕ. 15. Пур çĕрте те: хирсемпе вăрмансенче те, тӳпере те, шывра та, çĕр айĕнче те — çурхи сасăсем илтĕнеççĕ. 16. Кĕрлет çурхи тĕнче, шавлать! (*Н.Сладков* çырнинчен.)

1. 10—13-мĕш предложенисенче тĕп пайĕ япала ячĕпе пĕтекен анлă сăмах майлашăвне тупăр. Унăн тĕп пайĕ хăй пĕлтерĕшлĕ пĕр сăмахран, пăхăнулли виçĕ сăмахран тăтăр. Ку сăмах майлашăвĕ хăш предложенире?

1) 10 2) 11 3) 12 4) 13

2. Кăтартнă предложенисенчен хăшĕ сыпăнуллă хутлă?

1) 4 2) 1 3) 2 4) 8

3. 7-мĕш предложение вуласа тухăр. Хăш цифрăсем предложенири запятойсемпе тӳр килеççĕ?

1) 1,2,3,4 2) 2,3,4 3) 2,3,4,5 4) 3,4,5

4. 3—6-мĕш предложенисенчен хăшĕ пĕр тĕп членлă?

1) 3 2) 4 3) 5 4) 6

5. Определени ушкăнне кĕрекен пăхăнуллă пай хăш предложенире тĕл пулать?

1) 8 2) 5 3) 9 4) 10

6. Хăш предложенире пĕр йышши членсене запятойпа уйăрнă?

1) 4 2) 10 3) 11 4) 15

# ТЕСТСЕН ХУРАВĔСЕМ

**I. Сăмах майлашăвĕн хăш схеми тĕрĕс?**

1—2, 2—4, 3—1, 4—3, 5—3, 6—1, 7—2, 8—4, 9—2, 10—2, 11—3, 12—2, 13—3, 14—1, 15—3, 16—1

**II. Хутсăр предложенин хăш схеми тĕрĕс?**

1—2, 2—4, 3—1, 4—2, 5—1, 6—4, 7—3, 8—3, 9—3, 10—3, 11—1

**III. Хутлă предложенири хутсăр предложенисене мĕн çыхăнтарать?**

1—2, 2—2, 3—3, 4—3, 5—2, 6—3, 7—2, 8—3, 9—4, 10—3, 11—4, 12—3, 13—3, 14—3

**IV. Хутлă предложенин хăш схеми тĕрĕс?**

1—2, 2—3, 3—3, 4—3, 5—2, 6—4, 7—3, 8—2, 9—3, 10—3, 11—4, 12—3, 13—2

**V. Предложенири чарăну паллине мĕнле пунктуаци правилине пăхăнса лартнă?**

1—1, 2—2, 3—4, 4—4, 5—4, 6—2, 7—2, 8—2, 9—2, 10—2, 11—2, 12—2, 13—2, 14—2, 15—2, 16—2, 17—4, 18—4, 19—4, 20—2, 21—2, 22—2, 23—2, 24—4

**VI. Предложенири икĕ точкăна мĕнле правилăна пăхăнса лартнă?**

1—2, 2—2, 3—2, 4—2, 5—2, 6—2, 7—2, 8—2, 9—2, 10—2, 11—2, 12—2, 13—2

**VII. Предложенисене вуласа тухăр та ĕçсене тăвăр.**

**I:** 1—1, 2—1, 3—2; **II:** 1—3, 2—3, 3—2; **III:** 1—3, 2—2, 3—2; **IV:** 1—2, 2—2, 3—1; **V:** 1—2, 2—2, 3—3; **VI:** 1—3, 2—2, 3—1; **VII:** 1—4, 2—2, 3—4; **VIII:** 1—2, 2—4, 3—4

**VIII. Текста вулăр та тестсемпе ĕçсене тăвăр.**

**I:** 1—3, 2—9, 3—1, 4—4, 5—2, 6—3; **II:** 1—2, 2—2, 3—2, 4—1, 5—1, 6—2; **III:** 1—2, 2—4, 3—2, 4—3, 5—4, 6—3; **IV:** 1—2, 2—4, 3—2, 4—3, 5—2, 6—1; **V:** 1—1, 2—2, 3—2, 4—4, 5—1, 6—4; **VI:** 1—1, 2—2, 3—3, 4—4, 5—1, 6—4; **VII:** 1—2, 2—2, 3—3, 4—1, 5—2, 6—4.

## ТУПМАЛЛИ

*Умĕн калани* . . . . . . . . . . . . . . 3
Синтаксисăн тĕп единицисем . . . . . . . . 4
Синтаксис тишкерĕвĕ. Тишкерӳ тĕслĕхĕсем . . 32
Тишкерӳ тумалли текстсем . . . . . . . . . 43
Тишкерӳ тумалли предложенисем . . . . . . 47
Пĕлĕве тĕрĕслемелли тестсем . . . . . . . 50
Тестсен хуравĕсем . . . . . . . . . . . . 95

*Учебное издание*

**Андреева Евдокия Александровна**

**ЧУВАШСКИЙ ЯЗЫК**

**Синтаксис**

***Справочник***

**Для 8—9 классов**

*На чувашском языке*

Редактор *Р.И. Крысина*
Художественный редактор *И.Е. Калентьева*
Технический редактор *А.В. Семенова*
Корректоры *Н.В. Вечеркина, Н.Г. Орлова, З.И. Гаврилова, Н.Н. Маслова*
Компьютерная верстка *М.В. Филипповой*

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 6600. Подписано к печати 23.10.08. Формат 60х90 $^1/_{16}$. Гарнитура Тип Таймс. Бумага офсетная. Усл. печ. л. 6,0. Уч.-изд. л. 3,83. Тираж 3000 экз. Заказ № К-8216. Изд. № 49.

ГУП Чувашской Республики «Чувашское книжное издательство» Минкультуры Чувашии, 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.
Отпечатано в ГУП «ИПК «Чувашия», 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.

49

Чăваш
кĕнеке
издательстви